# Михаил Васильевич Игнатьев Ленинграда хӳтěлесе паттăррăн пуç хунă тăванěсен нумай япалине Çар музейне панă ● 4 стр.


*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мěшěнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĚРАРĂМĚ

4 (822) №, 2014, нарăс, 1

Хакě ирěклě.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



Шăмăршă тăрăхěнче кěнеке компьютерпа йăнаçлах тупăшать.

Çăлавçă вутăшпи.

2 стр.

Саккун тесен… сехре хăпмасть халь.

3 стр.

Сирěн шалу… мěн тěслě?

Асаттен вăрçăран килнě çырăвěсене куççуль витěр вулаттăм.

5 стр.

Тусан – кил-çурт кăна мар, сывлăх тăшманě те.

Пăрулана ěнене шалкăм çапасран асăрханăр.

8 стр.

Шăл тухтăрě… капкăн лартать.

Вăхăта парăнмасть юрату.

9 стр.

Арçын пуçне çавăрма пěлекен актриса.

11 стр.




## Хаçат юлташ, тăван пекех хаклă

Шупашкар районěнчи Çěньялсем Елизавета Антонова почтальона çав тери хисеплеççě. "Эпир çывăрса тăричченех хаçат-журнал валеççе тухать вăл. Çил-тăвăл алхасма пуçласан пичет кăларăмěсене верандăнах кěртсе хурать", – тет ял-йыш. Елизавета Евгеньевнăна шартлама сивě те хăратайман. Кирек мěнле çанталăкра та ěçе васкать хěрарăм.

"Тăван пекех маншăн "Чăваш хěрарăмě" хаçат. Почтальона кěтсе чӳречерен пăхатăп, урама тухса тăратăп. Кашни страницăна пěр сас палли сиктермесěр вуласа тухатăп. Кивě пěр номере те пăрахман. Халě юратнă кăларăма кěрӳ çырăнса парать", – ăнлантарать сакăр вунна çитекен Мария Прокопьева. Çаплипех ал ěçěпе те аппаланать вăл.

Çак ялти Гавриловсем те, Виноградовсем те, Ильинсем те юратса вулаççě пирěн хаçата. "Мěн тухма пуçланăранпах çырăнса илетěп ăна. Малашне те юлташлă пуласчě", – чунне уçать Галина Ивановна.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

**Автор сăн ӳкерчěкě.**

## Нарăсăн 1-мěшěнчен – йӳнě хакпа

**Хисеплě вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчěн кăларăмěсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мěшěнчен тытăнса пуш уйăхěн 31-мěшěччен иртнě çулхи хаксемпе çырăнтараççě.**

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĚСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмěсенче | «Чăваш пичет» киоскěсенче | «Советская Чувашия» киоскěсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачě | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хěрарăмě | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

*Юр çинче кăмпа ан шыра.*

Каларăш.

## ÇАНТАЛĂК



| | кăнтăрла | çěрле |
|---|---|---|
| 01.02 | -19 | -23 |
| 02.02 | -14 | -11 |
| 03.02 | - 9 | -12 |
| 04.02 | -11 | -13 |
| 05.02 | -14 | -23 |
| 06.02 | -21 | -27 |
| 07.02 | -20 | -20 |



*ПУЛТАРУЛĂХ*

# Çуркунне çитсен...



Кӳкеçри лицейра 8-мĕш класра вĕренекен Анна Васильева çинчен амăшĕ Нина Николаевна тĕлĕнмелле ăшшăн каласа кăтартать. Аня мĕн пĕчĕкрен чăваш юрри-кĕввине килĕштерет. Амăшĕ сăпка юрри чăвашла шăрантарнă май ыйха путнă Аня. Кăшт ӳсерехпе çывăрма вăхăт çитсен хăех çав юрă кĕввине ĕнĕрленĕ. Йăмăкĕ Катя çуралсан 2-ри хĕр ача кĕçĕннине хăй юрласа çывратнă. Амăшне çуралнă кунпа саламласа Аня яланах юрă парнеленĕ, пукан çине хăпарса тăрса шăрантарнă вăл ăна.

4 çултанпа Аня поселокри ача-пăча ӳнер шкулне çӳреме тытăннă. Хĕр пĕрчине садикре ташлама кайма сĕннĕ те çавăнтанпа кашни кунах: «Хăçан каятпăр?» – аптăратнă амăшне пĕчĕкскер. Нина Николаевна чĕлхе çине мĕн килнине: «Çуркунне», – тесе персе янă. Аня ку калаçу патне тек таврăнман, амăшĕ те çакăн çинчен маннă. Хĕвеллĕ пĕр кун хĕр ача чӳречерен тумла юхнине пăхса тăнă. «Хĕл иртет. Кĕçех йывăçсем çулçă кăларĕç», – пепкипе çепĕççĕн калаçнă амăшĕ. «Апла тăк паянах ташламалли пушмак илме каятпăр!» – савăннă Аня. Çав кунран çӳреме тытăннă та вăл асăннă шкула. Каярахпа Шупашкарти Трактор тăвакансен культура керменĕнчи «Сувар» ташă халăх ансамблĕне çӳреме пуçланă. Ушкăн ертӳçи ЧР тата РФ тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анатолий Музыкантов асамçă евĕрех туйăннă ăна. Хăйĕн вĕрентекенне чунтан хисеплениpех малашлăхне сценăпа çыхăнтарасшăн Аня. Фестивальсене хутшăнса «Суварпа» пĕрле çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесне çитнĕ вăл, кунсăр пуçне Литван тĕп хулинче Вильнюсра пулни те асĕнче юлнă. Çапах та, унăн шухăшĕпе, Чăваш Енрен хитререх вырăн çук. Пултарулăх ăна çĕнĕ юлташсем тупма пулăшнă. Халĕ тĕрлĕ хулари тусĕсепе çыхăну тытать вăл. Юлашки вăхăтра Аня Васильева юрăсем шăрантарать. Йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма ачаранах хăнăхнăскер палăртнă тĕллевĕсене пурнăçа кĕртессе шанас килет.

**Лидия ИЗЕКЕЕВА,**
**ЧР тата РФ Писательсен союзĕсен членĕ.**

*МАТТУР*

# Çăлавçă вутăшпи

РФ Шалти ĕçсен министерствин Сĕнтĕрвăрринчи уйрăмĕн юрисконсульчĕ Светлана Ерпылева районти спорт комплексĕн бассейнĕнче шыва кĕнĕ чухне путакан 13-ри хĕр ачана вăхăтра пулăшнăшăн «Вилĕмрен çăлса хăварнăшăн» медале тивĕçнĕ. Кăвакарса кайнăскере бассейн тĕпĕнчен туртса кăларсан шыв çăтса тултарнă ачана медицина пĕрремĕш пулăшăвĕн мелĕсемпе усă курса аранах чĕртнĕ. Унăн сывлăхĕпе кăсăкланса больницăна та çитнĕ, туслă çыхăнăва татман. Сĕнтĕрпуç шкулĕнче вĕренекен Оксана Никонорована иккĕмĕш пурнăç парнеленĕскер унăн хреснамăшĕ пулма килĕшнĕ.

Ишекенсен секцине 7 çултанпа çӳрекен Светлана Юрьевна Ĕпхӳре пурăннă чухнех икĕ çынна путасран çăлнă-мĕн. Вилĕм çав тери çывăхрине пĕрре кăна мар туйса курнă 3 ача амăшĕ: «Асăрханулăха никамăн та çухатас марччĕ, инкеке лекекене пулăшма васкасчĕ», – тет.

Полици капитанĕ пушă вăхăтра сăвă çырать, спортпа та туслă. Шывра шăмпăлтатма юратаканскер çăлавçă вутăшпие аса илтерет. Республикăри акватлон, триатлон ăмăртăвĕсен чемпионĕ юхан шывра ишессипе Шупашкарта иртнĕ тупăшура та çĕнтернĕ. Тутарстан, Мари Эл, Чĕмпĕр облаçĕн «моржĕсене» хыçа хăварса 100 метрлă дистанцие пĕрремĕш вĕçленĕ вăл.

**Лина МАКАРОВА.**

*ШĂПА*

# Пĕрлех пек туйăнать

Çу уйăхĕн вĕçĕ çывхарса пыратчĕ. Эпир, Тукайри пуçламăш шкултан вĕренсе тухакансем, хĕвеллĕ пĕр кун арифметикăпа экзамен тытрăмăр. Пирĕн пĕлĕве тĕрĕслеме çĕнĕ вĕрентекен килнĕччĕ. Нина Егоровна пĕрре курсах ачасен кăмăлне кайрĕ: лăпкă, сассине хăпартмасăр калаçать, хушăран кулкаласа та илет.

Авăн уйăхĕн вĕçĕнче эпĕ Нина Егоровнăна тепре куртăм. Каç пулнă. Хамăр кил умĕнче атте кӳршĕ арçыннисемпе калаçса тăрать. Вĕсем мĕн сăмахланине эпĕ хăлхана тăратсах итлетĕп. Тукайри аслă урамсенчен иккĕшне Мăраткасси тата Выçликасси теççĕ. Мăраткасси вĕçнелле – пирĕн кил. Урамсем ун чухне путăкшăтăклă, пылчăклă-тусанлăччĕ.

Велосипедпа пĕр хĕрарăм вĕçтерсе хăпарать. Ара, ку Мăрат вĕрентекенĕ Нина Егоровна-çке-ха. Чарăнса тăмарĕ. «Уткин, ывăлу ыран шкула парта йышăнма пытăр!» – тесе кăшкăрса хăварчĕ те малалла кайрĕ.

Парта та йышăнтăмăр, вĕренме те пуçларăмăр. Класс ертӳçи – Нина Егоровна. Упăшкине Егор Никифорович тесе чĕнеççĕ. Пире – ботаника, улттăмĕшçиччĕмĕшсене хими тата зоологи вĕрентет.

Нина Егоровнăна хăвăрт хăнăхрăмăр. Ирхине те, кăнтăрла хыççăн та шкултаччĕ вăл. Кăмăлĕ усă чухне пире ятран чĕнетчĕ, айăпа кĕрсен, киле панă ĕçе туса пымасан хушамата асăнатчĕ. Урокра вăл ачасене пĕр вĕççĕр ĕçлеттеретчĕ: арифметика чылайăшĕшĕн чи юратнă предмет пулса тăчĕ. Нина Егоровна вырăсла лайăх пĕлет, çак чĕлхепе пĕр такăнмасăр калаçать.

Класс ертӳçи пуçаруллă пулнипе Октябрь уявне те, Çĕнĕ çула та лайăх кĕтсе илтĕмĕр. Кӳршĕ ял ачисемпе те туслă пурăнма пуçларăмăр.

Пиллĕкмĕш класра эпĕ чи лайăх вĕренекен ачасен йышне кĕтĕм. Пуçарулăх та çук марччĕ-ха манăн. Никампа канашламасăрах Миша Портнов вĕренекенпе иксĕмĕр «Пионер» стена хаçачĕ кăларма пикентĕмĕр. Миша хаçатăн ятне сăрласа илемлетет, ӳкерет, эпĕ заметкăсем çыратăп. Нина Егоровна уйăх ытла чирлесе пурăннă вăхăтра виçĕ-тăватă номер кăлартăмăр. Вĕсем пурте класс пӳлĕмĕн стени çинче çакăнса тăратчĕç. Сывалса çитнĕ учитель вĕсене тӳрех асăрхарĕ, тимлесе вуларĕ, Миша Портнова иксĕмĕре мухтамарĕ те, ятламарĕ те.

Стена хаçачĕсем пирки калаçу тепĕр темиçе кунран пулса иртрĕ. «Лайăх, ырă ĕç тунă эсир, ачасем. Анчах та малтан никампа та канашламан-мĕн. Директор та, чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ те пĕлмест. Хаçат кăларма пуçличчен вĕсемпе калаçмаллах пулнă», – терĕ Нина Егоровна. Мишăпа иксĕмĕршĕн çак калаçу питĕ пысăк урок вырăнне пулчĕ.

Хĕллехи каникул вăхăтĕнчи пĕр куна час-часах аса илетĕп. Вăл çул Аслă Чурачăкри вăтам шкулăн вун пĕрмĕш класĕнчен вĕренсе тухма хатĕрленеттĕм. Каникулта пушă вăхăт нумай. Хĕллехи çил-тăманлă кун. Çанталăк начаррине пăхмасăрах урама тухрăм. Выçликасси енчен хыр кĕрешĕсем тиенĕ çунапа гусеницăллă трактор анать. Вăл пирĕн умранах иртсе кайрĕ, ăна пăхса ăсатрăм. Çуна хыçĕнче, вăрăмрах тухса тăракан кĕреш çинче, хĕрарăм ларать: пальтопа, хулăн тутăрпа. Тумтирĕ юрпа хупланнă. Ара, ку Çĕнĕ Мăратри çичĕ çул вĕренмелли шкулта хамăрăн класс ертӳçи пулнă Нина Егоровна Егорова-çке-ха! Вăл кусăмсăр майпа Шупашкарти пединститутра вĕренни çинчен илтнĕччĕ. Апăрша, хĕллехи сессирен киле таврăнать пулĕ ĕнтĕ...

Çăмăл пулмарĕ Нина Егоровнăн пурнăçĕ. Вăтăр пилĕк çула яхăн шкулта ĕçле, икĕ институт пĕтер, пилĕк ача çуратса пăхса ӳстер! Сывлăхĕ çирĕпех марччĕ, вăхăт-вăхăт астма аптăратса ӳкеретчĕ. Çав чир аллă çул тултарсанах пенсие тухма хистерĕ ăна.

Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн вун пĕр çул анчах пурăнчĕ Нина Егоровна. 1985 çулхи чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче, утмăл икĕ çула кайса, район больницинче вăл ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Ăна Çĕнĕ Мăрат масарĕнче пытарнă. Кунта кашни çулах пулатăп эпĕ. Чи малтан Нина Егоровна тăпри умне тăрса пуçăма таятăп. Аса илӳсен тыткăнне кĕрсе ӳксе чылайччен тăратăп вил тăпри умĕнче.

Пурăннă пулсан Нина Егоровна кăрлачăн 25-мĕшĕнче 90 çул тултармаллаччĕ. Вăл нумайранпа çук ĕнтĕ, анчах яланах пирĕнпе пĕрле пек туйăнать.

**Геннадий УТКИН.**
Шупашкар хули.

*ШĂМĂРШĂ ХЫПАРĔСЕМ*

# Кĕнеке вулакансем пур-ха

Халĕ килĕрен тенĕ пек компьютер пур, çапах çынсем ялти вулавăша тăтăшах çӳреççĕ. Кĕнеке яланах пĕлӳ çăл куçĕ пулнă, пулать те. Шăмăршă районĕнчи Анат Чаткас библиотекарĕ Алена Лукианова хăйĕн ĕçне чунран юратса пурнăçлать. Пултаруллă та пуçаруллă хĕрарăм кĕнеке илме, хаçат-журналпа паллашма килекенсемпе кăмăллăн калаçать, кашнин валлиех чун-чĕре ăшшине çитерет.

– Вулавăша ентешсем хаваспах килеççĕ, – тет Алена Геннадьевна. – Шкул ачисем те, аслисем те, ватăсем те кĕнеке ыйтаççĕ. Пĕрисем – юрату, теприсем – вăрçă, виççĕмĕшсем истори çинчен вулама юратаççĕ. Вĕренекенсем шкул программин темисемпе çыхăннă литературăна шыраççĕ. Дисксемпе те усă куракан та йышлă. Петр Ухорский, Николай Степанов, Валентина Морозова вуламан кĕнекесем юлман та пулĕ.

А.Лукианова вырăнти «Шурăмпуç» фольклор ушкăнне те ертсе пырать. Шел, юлашки вăхăтра концертсене сайрарах йĕркелеме пуçларĕç, аякка тухса çӳреме те тăкаклă. Вулавăш çумĕнчи «Ирхи шуçăм» клуба хастар хĕрарăмсем уйăхра икĕ хутчен пухăнаççĕ. Вĕсем апат-çимĕç янтăлама, ал ĕçне хăнăхаççĕ, пĕрпĕрин опычĕпе паллашаççĕ. Çулталăкĕпех мероприятисем, тĕл пулусем, куравсем иртеççĕ библиотекăра. Пĕлес, тавра курăма аталантарас шухăшлисем валли алăк яланах уçă.

# Савăнăç валеçекенсем

Ырă кăмăллă та тараватȁ çынсем вăй хураççĕ Анат Чаткасри çыхăну уйрăмĕнче. Г.Тихоновăпа Г.Фадеева куллен килсерен хаçат-журнал валеçеççĕ, çырусене те, пенси укçине те çынсем патне яланах вăхăтра çитереççĕ. Кинемейсемпе – ватăлла, яшсемпе çамрăкла калаçаççĕ вĕсем. Хаçат-журнал çырăнтарас енĕпе те лайăх ĕçлеççĕ.

Галина Тихонова Анат Чаткасри çынсене савăнăç валеçет. Çилтăман-и, хĕвел ытлашшипех хĕртет-и – 1987 çултанпа ĕçлекен почтальонкăшăн пур пĕрех: тивĕçне вăхăтра пурнăçлама вĕреннĕскершĕн нимĕнле чăрмав та çук.

Галина Фадеева вара Тури Чаткас урамĕсем тăрăх çӳрет, Максим Горькийпе Хĕрлĕ Васан поселокĕсене те çитет. Хăшĕ-пĕрин хаçат-журналне ешчĕке чиксе хăварать, теприсене алăранах тыттарать. Ăш пиллĕ хĕрарăма кунта йыттисем те паллаççĕ ĕнтĕ: вĕрсе сас параççĕ те кайса выртаççĕ.

– Вырăнти почтальонсемпе мухтанатăп, – терĕ Анат Чаткасри çыхăну уйрăмĕн ертӳçи Надежда Юнкерова. – Пĕр-пĕринпе килĕштерсе, ăнланса ĕçлетпĕр. Ял халăхĕ вĕсене усал сăмахпа асăннине пĕрре те илтмен.

**Александр МИХАЙЛОВ.**
Шăмăршă районĕ.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Ăна чупма чараймаççĕ

Марина ТУМАЛАНОВА

**Пушкăртстанри чăваш ялĕнчи пĕр шкул директорне район центрĕнчи вĕренӳ пайне чĕнтернĕ. Сăлтавĕ... пыйтăпа çыхăннă. Амăшĕ тĕпренчĕкĕ пыйтланнине сиснĕ те тӳрех çăхав çырнă. Çакăншăн, чи малтанах, пуçлăх айăплă имĕш...**

**Тĕрĕсех, пыйтăран çаплипех хăтăлса пĕтейместпĕр. Халĕ ĕлĕкхи пекех иртĕхеймест вăл, пур пĕрех хăйĕн çинчен аса илтерсех тăрать. Ача садĕнчи тасалăх табелĕнче те педикулез пирки асăнни пур. Тĕпренчĕке çак чир çакланнине ашшĕ-амăшĕн журналта палăртса хăвармалла. Килте ачан пуçне пăхсах тăмаллине пĕлтерет çакă.**

**Нумаях пулмасть Шупашкарти пĕр садикре çакнашкал тĕслĕх пулнă. Çывăрса тăнă хыççăн воспитатель хĕр ачасен çӳçне çивĕтлеме пуçланă. «Лайăхрах пăхрăм та – пыйтă чупать. Тыттарчĕ тата – тарса çухалаймарĕ. Пыйтă урăх хуçа тупсассăн малтанхи вăхăтра хăйне хăтсăр туять теççĕ», – ăнлантарать хĕрарăм. Телее, тимлĕ воспитательпе няня пĕртен-пĕр пыйта, 3-4 шăркана çийĕнчех вĕлернĕ. Те троллейбусра, те бассейнра, те хăнара ернĕ ĕнтĕ ăна çавскер? Юн ĕçекен кăпшанка вăхăтра асăрхани нимрен паха. Юрать-ха пыйтă пĕр пуçран теприн çине сикме ĕлкĕреймен.**

**Ăсчахсем çирĕплетнĕ тăрăх – çынна пыйтă 5,5 миллион çул каяллах аптăратма пуçланă. Ун чухне халăх Африкăран çурçĕр районсене куçма пуçланă. Çавна май çи-пуç ăсталама тивнĕ вĕсен. Чĕр чун тирĕнче, кайăк тĕкĕнче вара пыйтă 44 миллион çул каялла ĕрчеме пуçланă. Ĕлĕк-авал кил хуçи хăнана хисеплесе унăн пуçĕнчи пыйтă-шăркана вĕлернĕ теççĕ.**

**Çав кăпшанкă пирки çынсем тĕрлĕ халап шухăшласа тупнă. Этем ĕççĕр ан пурăнтăр тесе пыйтă тусанпа кĕлтен тухнă имĕш. Сербсем каланă тăрăх – турă амăшĕ, Христоса çăлас тĕллевпе çула тухнăскер, çумăрпа йĕпеннĕ те кĕтӳç çуртне кĕнĕ. Çипуça типĕтес тесе вăл кил хуçине вăратма пикеннĕ. Анчах кĕтӳç хăнк! та туман. Хĕрарăм сапаласа пенĕ кĕл пĕрчисем пыйтă çаврăннă та арçынна çыртма пуçланă. Польша халăхĕн те çакнашкал калани пур: чиркӳре кĕлĕ пынă вăхăтра Христос çынсем сак çинче ахаль ларнине курнă. «Малашне сирĕн валли те ĕç тупăнĕ», – вĕсен енне тусан вĕçтернĕ вăл. Кашни пĕрчĕрен пыйтă пулнă.**

**«Иккĕмĕш класа çитиччен анне çӳçе шакла касса тăнă. Çавăнпах пире пыйтă ереймен», – пĕрре кулса, тепре кăмăлсăрланса калать пĕлĕшĕм. Хĕр ачан ун чухне çӳçне çитĕнтерес килнĕ ĕнтĕ.**

**Çапах мĕнле пĕтермелле-ха ăна? Пĕрре шур çырли сĕткенĕ шăркана тураса кăларма пулăшни пирки илтнĕччĕ. Халĕ аптекăра та пыйтă вĕлерекен курăк шывĕ, хими препарачĕ тупса илме пулать. Вĕсем те пур чухне пулăшаймаççĕ иккен. «Мана ĕлĕкхилле кăраççыпа усă курма сĕнчĕç. Ăна шывпа хутăштарма тавсăрса илеймен. Мĕн тетĕр? Хĕр ачан пуç тирĕ çунса кайрĕ. Кайран кĕсенленсех ларчĕ. Хам та унпа пĕрле макăраттăм», – пытармасть пĕр пĕлĕш.**

**Чăваш Республикинчи пĕр ялти синкерлĕ пулăм çаплипех пуçран тухмасть. Пыйтă ернĕ хĕр ача канлĕх çухатнă. Педикулезпа чирлĕскерне тантăшĕсемех темĕн те пĕр каласа пĕтернĕ. Шкул ачи чăтайман – çакăнса вилнĕ. Эх, тăрăхланине чĕре патне илмелле пулман унăн. Пыйтă ерни тĕнче пĕтсе килниех мар-çке. Ăна çĕнтерме пулатех.**

**Пыйтăллă кашни çынна шута илеймеççĕ паллах. Чăваш Республикинчи гигиенăпа эпидемиологи центрĕ çакнашкал пĕтĕмлетӳ тунă: Шупашкарта пĕлтĕр, 2012 çулпа танлаштарсан, педикулезпа чирлесси 1,8 хут чакнă. Пĕтĕмĕшле кăтарту та республикăра пыйтă сахалланнине çирĕплетет. Центр специалисчĕсем сывлăх сыхлавçисене ача садĕнче, интернат шкулта, ача çуртĕнче, шкулта педикулез ернине тăтăш тĕрĕслеме сĕнеççĕ. Çакă ахальтен мар. Пыйтă шатраллă тиф сарма пултарать. Педикулезран хăтăлсан та унăн микробĕсем çын ӳтĕнче юлаççĕ. Темиçе вунă çул иртсен те стреса пула çĕнĕрен вăй илме пултараççĕ вĕсем.**

ЙĔРКЕЛĔХ ХУРАЛĔНЧЕ

# Саккун тесен... сехре хăпмасть халь

Ĕнер ЧР прокурорĕ Владимир Метелин ертсе пынипе республика прокуратуринче анлă коллеги иртрĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Генеральнăй прокуратурăн Атăлçи округĕнчи управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Александр Корсунов, республикăри право хуралĕн ертӳçисем, прокуратура аппарачĕн ертӳçисем, хула тата район прокурорĕсемпе çумĕсем хутшăнчĕç.

Владимир Метелин прокуратурăн пĕлтĕрхи пĕтĕмлетӳллĕ кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ, малашнехи ĕç-хĕлĕн çул-йĕрне палăртрĕ. Республика прокурорĕ пĕлтернĕ тăрăх – преступлени тăвасси 14,4% чакнă, уйрăмах йывăр преступленисен хисепĕ пĕчĕкленнĕ. Прокурорсем полици ĕçченĕсем пытарнă 513 «хура» ĕçе тупса палăртнă. 543 сотрудника, вăл шутра 54 ертӳçе, явап тыттарнă. Ял тăрăхĕсен 15 пуçлăхĕ, вĕсен çумĕсем, район администрацийĕн пай пуçлăхĕсем, патшалăх учрежденийĕн тата органĕн 7 ертӳçи тунă саккуна хирĕçле ĕçсене чарса лартнă.

Тĕрĕслĕх шыраса прокуратурăна çул тытакансен йышĕ çулран çул ӳссе пырать. Çынсем хăйсен правине хӳтĕлеме вĕренсе пыраççĕ. Пĕлтĕр 37239 çын пулăшу ыйтса килнĕ, вĕсенчен 23346-шĕн ыйтăвне татса пама май килнĕ.

«Халăх сире шанать, сирĕн ĕçе пысăк хак парать – çапла çирĕплетет социологи ыйтăмĕ. Активпа тĕл пулнă май кун пирки пĕрре мар илтме тӳр килнĕ. Обществăра тăнăçлăх хуçаланнинче сирĕн тӳпе те пур. Çапах та хăш-пĕр ыйтупа çине тăмалла. Сăмахран, çĕр пурлăхĕ тĕлĕшĕпе. Коррупци çулне малтанхи тапхăртах пӳлнин пĕлтерĕшĕ пысăк. Çавăн пекех халăха алкоголизмран хăтарассипе те çивĕчрех ĕçлемелле...» – палăртрĕ Михаил Игнатьев йĕрке хуралçисен ĕç-хĕлне пысăка хурса хакланă май.

**Алина ИЗМАН.**

ЫР КĂМĂЛЛĂХ МАРАФОНĔ

# Ача хăйне юратнине туйтăр

Ĕнер республикăри ачасен тата çамрăксен реабилитаци центрĕнче «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонĕ уçăлчĕ. ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Алена Аршинова, ЧР сывлăх сыхлав министрĕ Алла Самойлова, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Юрий Кислов, ЧР Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Ольга Зайцева тата ыттисем сипленекен ачасемпе, кунти условисемпе паллашрĕç. Алла Владимировна çак центрăн ĕç опытне ăша хывмашкăн ют çĕр-шыв специалисчĕсем те килсе кайнине палăртрĕ. Апла пулин те сиплев технологийĕсене тата çĕнетесшĕн, центр ĕçне тĕслĕх шайне çитересшĕн.

Пĕлтĕр пухмача вăтамран 8,5 миллион тенкĕ пуçтарăннăччĕ. Кăçал халăх тата ытларах укçа хывасса шанаççĕ марафон йĕркелӳçисем. Муниципалитетсен хушшинче хăйне май ăмăрту та ирттересшĕн. Пĕр çын пуçне хăш тăрăх ытларах укçа пуçтарать – çавă çĕнтерет. Уйрăмах хастаррисене хавхалантарма май тупĕç. Влаç çыннисем ют тĕпренчĕкĕ тăван ача пекех юратмалли, сусăррисене пурăнма, аталанма, вĕренме тивĕçлĕ условисем туса памалли, сахал тупăшлă çемьесене май килнĕ таран пулăшмалли çинчен каларĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ОЛИМПИАДА

# Çулăм Сочи хулине çывхарать



Олимп çулăмĕ çитес эрне кун, нарăсăн 7-мĕшĕнче – XXII хĕллехи вăййăсене уçнă çĕре – Сочи хулине çитет. Уяв «Фишт» стадионта 20:14 сехетре пуçланать, 3 сехете яхăн пырать. Олимп чашăкне çутни – уявăн тĕп саманчĕ, ăна усăлха хăпарнă факелтан чĕртĕç.

Пирĕн çĕр-шывра Олимп çулăмĕн эстафети 123 кунра 65 километра парăнтарчĕ, 2900 хулана çитрĕ. Эльбрус тăвĕ çине хăпарчĕ, Байкал тĕпне анчĕ, Çурçĕр полюсне çитрĕ, усă космоса хăпарчĕ... Çакна 130 миллион çын курма пултарчĕ.

Паян çулăм Çурçĕр Осетие çитет. Кунта ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен Олимп чылай чемпионĕ çуралса ӳснĕ, вĕсен хисепĕпе республика Гиннесс рекорчĕн кĕнекине кĕнĕ. Факела Владикавказран вертолетпа илсе килеççĕ, ăна кĕл чечекĕн çеçкипе сапса тухнă стадионта кĕтсе илĕç. Олимп наградине тивĕçнисене кунта шăпах çапла чысласçĕ.

**Лиана ВАНИНА.**

ЙĔЛТĔР ЙĔРĔ-2014

# Ватти те, вĕтти те – уява

Нарăсăн 2-мĕшĕнче Раççейре иртекен «Йĕлтĕр йĕрĕ» – Чăваш Еншĕн те хĕллехи ăмăртусенчен чи калăпăшли. Кăçал ăна Сочири XXII хĕллехи Олимп вăййисене халалланă. Ыран вĕттинчен пуçласа ватти таранах йĕлтĕр çине тăрать. Сывă пурнăç йĕркине суйлакан ахаль çынсемпе пĕрле профессионал спортсменсем, Олимп чемпионĕсем, спорт ветеранĕсем, политика ĕçченĕсем, тĕрлĕ шайри влаç представителĕсем йĕлтĕр сыраççĕ. Пĕлтĕр уява Чăваш Енри 47 пине яхăн çын хутшăннăччĕ, кăçал йыш татах та пысăкланасса шанаççĕ.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн М.Горький, Мускав проспекчĕсенчи, Т.Кривов урамĕнчи çула 9 сехетрен пуçласа 16 сехетчен хупаççĕ. Çав вăхтра 3, 7, 12, 21-мĕш троллейбуссем Гузовский урамĕпе çӳрĕç.

**Анна ГЕРАСИМОВА.**



ВУТ-ÇУЛĂМ ВИТĔР

# Асрах-ха юнлă блокада

**Кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шывра Раççей Çар мухтавĕн кунне паллă турĕç. Шăпах çак кун Ленинграда нимĕç фашисчĕсен блокадинчен хăтарнăранпа 70 çул çитрĕ. Этемлĕх историйĕнчи чи хурлăхлă пулăма сирме – Ленинград хулине тăшман ункинчен хăтарма – пирĕн республикăран та чылайăн хутшăннă.**

**Шел те, паянхи куна ку хула ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ паттăрсем Чăваш Енре питĕ сахал тăрса юлнă. Мĕн тăвăн, вăхăт иртет, çулĕ те хушăнсах пырать. Апла пулин те Ленинграда ирĕке кăларассишĕн пынă хаяр çапăçусене хутшăннă, халĕ Вăрнар тăрăхĕнчи Пăртасра пурăнакан Василий Михайлов ветеран асĕнчех юлнă çав кунсем…**

## Ашшĕне пăхмах çуралнă

95 çула кайнă Василий Михайлович хĕрĕпе Зойăпа пурăнать. «Ури вăйсăрланнипе атте вунă çул ĕнтĕ вырăнпа выртать. Ытти енчен сывлăхĕ аван унăн, ал-ури сурнипе кăна аптрать», – тет Зоя Васильевна. Лайăх пăхать ветерана хĕрĕ. Кĕпи-йĕмне çусах тăрать, апат-çимĕçĕ сĕтел çинчен татăлмасть. Пÿртре ăшă, таса та çутă. Василий Михайловичпа мăшăрĕ Варвара Петровна вунă ача таранах çуратнă. Анчах та пепкисем вăрах пурăнай-ман. Уйрăмах хĕрĕсем пĕрин хыççăн тепри вилсе пынă. «Эх, мана хуньăм теекен те пулмасть ĕнтĕ», – тесе йĕнĕ тет ашшĕ. Кăштахран Зоя çут тĕнчене килет. Ун хыççăн çемьере тата тепĕр хĕр те çуралнă, вăл та часах куçне хупнă. Икĕ ывăлпа виçĕ хĕр пăхса çитĕнтернĕ Михайловсем. Ывăлĕсен те ĕмĕрĕ вăрăмах пулайман, вĕсем те тахçанах çук ĕнтĕ. Ахальтен йĕмен çав ун чухне мăнтарăн ашшĕ, хăйне ватлăхра пăхакан пирки пăшăрханнă. Мăшăрĕ хăйĕнчен 16 çул аслăрах. Варвара Петровна ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнăранпа, чăн та, нумай вăхăт иртнĕ. Вунă çул ĕнтĕ Василий Михайловичăн шанчăкĕ тата тĕрекĕ – хĕрĕ Зоя. Сăмах май, ашшĕн чи пысăк ĕмĕчĕ пурнăçланнă: Зоя качча тухса çемье çавăрнă. Кĕрÿллĕ пулса нумай çул хуньăм тенине илтсе пурăннă Василий Михайлов. Шел те, юратнă кĕрÿшĕ çулталăк çурă каялла чирлесе вилнĕ. Уншăн кулянса чирлесех кайнă хуньăшĕ, пĕр уйăх ытла вырăн çинчен те тăман.

«Атте питĕ лаша юрататчĕ. Эпĕ унран ниçта юлмасăр пĕрмай пĕрле ларса çÿреттĕм. Платник ĕçне лайăх пĕлетчĕ те, мана та хăма савалатта-ратчĕ. Аттепе иксĕмĕрех çапла çĕнĕ хапха, мунча турăмăр», – каласа кăтартать Зоя Васильевна. Хăй çамрăк чухне лартнă йывăç çуртрах пурăнать ветеран. Урам енчен те, шалтан та хитре пÿрчĕ. Хуралтисем те йĕркеллех, картишре те тирпейлĕ.

Ĕмĕр-ĕмĕр бригадирта, ферма пуçлăхĕнче ĕçленĕ Василий Михайлов колхозсем арканнишĕн, çынсем выльăх-чĕрлĕх усрасах кайманнишĕн куля-нать паян. Вăй питти чух яланах картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп тытнă, нихăçан та алă усса ларман. Вăрçă вутĕнче пиçнĕ арçын ĕлĕкхине лайăх ас тăвать, юнлă блокада паянхи кун та куçĕ умĕнчен каймасть. Анчах та питĕ йывăррăн калаçать. Çапăçура аманни юлашки вăхăтра уйрăмах сисĕнет, йывăр сурана пула чĕлхи çыхланать.

«Ванчăксем ÿт ăшĕнче халĕ те пур, хушăран тухкалаççĕ те», – тет Зоя аппа.

Василий Михайловичăн кунĕ чей, коферен мар, çăлти пăр пек сивĕ шывран пуçланать. Ăшăннине тиркет арçын, сиввине кăна ĕçет. Çак тарана çитсе ветеран нимле эмел те ăша ярса курман. Чĕрĕ шывсăр пуçне пахчари курăкран хатĕрленĕ техĕмлĕ чейе кăмăллать.

Ал-ури ват çыннăн, тен, çаплах ыратмĕччĕ те, вăрçă вăхăтĕнче питĕ шăнни хăй çинчен аса илтерет. 45-мĕш виçеллĕ атă-пушмак тăхăнаканс-керĕн пысăкраххи пулманран пĕчĕккипе, урана хĕсеккеннипе, çÿреме тивнĕ-мĕн. Тăвăр пулнăран пÿрнисем шыçа-шыçа кайнă. Çавна май чĕрнисем те ÿксе пĕтнĕ вăрçăра. Мĕн тăвăн? Чăтнă, тÿснĕ, шăла çыртса малалла талпăннă.

## Паттăр салтак

Василий Михайловичăн, 19 çулти каччăн, вăрçă пуçлансан вуннăмĕш кунах ят тухнă. Чи малтан Мари Республикинчи Суслонгер çывăхĕнче йĕрке-ленĕ стрелоксен 1064-мĕш полкĕнче сакăр уйăх тытнă вĕсене.

Блокадăри Ленинграда ирĕке кăларассишĕн хаяр çапăçусене кĕрет вăл. Хулана Пысăк çĕрпе çыхăнтарма Синявино çывăхĕнче тăшман ункине татмалла пулнă. Шурлăхлă вырăнта фашистсем питĕ çирĕп тăнă. Çапăçу вăраха тăсăлнă. Совет пин-пин салтакĕ ĕмĕрлĕхех выртса юлнă унта. Василий Михайлович та йывăр аманнă, янахăн сылтăм енне бомба ванчăкĕ лексе вăйлах çĕмĕрнĕ. Тăнне çухатнăскер темĕнле майпа чĕрĕ юлнă. Пĕр хускалми выртаканскер пирки вилнĕ тесе шухăшланă, аманнăскер таçтан тăрук вăй тупнă. Йывăр çапăçу хыççăн çур çул Новосибир-скри эвакогоспитальте сипленет. Сывалнă хыççăн салтака киле яраççĕ. Нумаях та пурăнаймасть ялта, уйăхран каллех салтак атти тăхăнма тивет. Хальхинче 296-мĕш артиллери полкне лекет. 122 миллиметрлă гаубица наводчикĕ юнлă вун-вун çапăçăва кĕрет. Каллех аманать. Тăван Пăртаса вăрçă чарăнсан çулталăкран тин таврăнать.

Василий Михайлов кĕçĕн сержанта «Хăюлăх-шăн» медальпе наградăласси çинчен 1944 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнчех алă пуснă. Анчах 65 çул ытларах иртсен тин, 2010 çулта ăна награда шыраса тупать.

Тунти кун, шăпах Ленинграда нимĕç фашисчĕсен блокадинчен хăтарнăранпа 70 çул çитнĕ кун Василий Михайлович килне хăнасем пуçтарăнчĕç. Вăрнар администрацийĕн пуçлăхĕ Леонид Николаев «Ленинград хулине фашистсен блокадинчен пĕтĕмпех ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнĕ ятпа» палла ветеран кăкăрĕ çине çакса ячĕ. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн çырăвне вуласа пачĕ. Пăртас ял администрацийĕн пуçлăхĕ Геннадий Петров та ватă патне парнесемпе çитрĕ. Вырăнти культура çурчĕн ĕçченĕсем илемлĕ юрăсемпе саламларĕç.

**Елена АТАМАНОВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**



КУРАВ

# Пĕр тăвансен паттăрлăхĕпе вилĕмсĕрлĕхĕ



Шупашкарти Çар мухтавĕн музейĕнче çак кунсенче Ленинграда нимĕç фашисчĕсен блокадинчен хăтарнăранпа 70 çул çитнине халалласа «Сан паттăрусем, Ленинград» ятпа курав уçăлчĕ. Фойере вырнаçтарнă стенд пысăках мар, анчах та питĕ пуян. Куравра – Ленинграда хÿтĕленĕ паттăрсен сăнĕсем, вĕсен çар документчĕсемпе вăрçăран янă çырăвĕсем, тумĕсем, эвакуаци шучĕпе куçарса килнĕ ачасем çинчен çырса кăтартнă истори...

Ленинграда хÿтĕленĕ пĕр тăван Игнатьевсем... Пиллĕккĕшĕ те çап-çамрăк, моряк тумĕпе. Пĕрин хыççăн тепри вăрçа тухса кайнăскерсем пурте Балти флотĕнче çапăçнă. Пĕр тăвансем – Тăвай районĕнчи Лачкасси ялĕнчен. Çемьери вăталăххи Павел Лăпкă океан флотĕнче çарта тăнă. Ăна кура Миша та карапсемпе кăсăкланма тытăнать. Шкул пĕтерсенех чăваш каччи хăй шăпине флотпа çыхăнтарать: 1936 çулта Аçтăрханти шыв транспорчĕн техникумне вĕренме кĕрет. Салтак атти тăхăнма вăхăт çитсен Балти флотне лекни савăнăç кăна кÿрет ăна. Чи пысăк ĕмĕчĕ тинех пурнăçланать, вăл та хаupload пиччĕшĕ пекех моряк. Шыв айĕн ишме вĕрентекен шкул хыççăн «С-7» экипажа лекет. Вăрçă пуçлансан виççĕмĕш кунах çапăçăва кĕме тивет Мишăн. Шыв киммине нимĕç икĕ катерĕ тапăнать...

Пĕр тăвансем, мĕн пĕчĕкрен пĕр-пĕринчен тĕслĕх илсе ÿснĕскерсем, пиллĕкĕшĕ те вăрçă вăхăтĕнче моряк тумĕпе çапăçаççĕ. Çемьере икĕ Иван пулнă: чи асли тата ун хыççăнхи. Арпаштарасран кĕçĕнреххине ашшĕпе амăшĕ Ванюк тесе чĕннĕ. Пачăшкă пĕрешкел ят хунă-мĕн. Чи кĕçĕнни Василий Ленинградра пиччĕшĕпе Мишăпа тĕл пулать. Калаçма та ĕлкĕреймеççĕ, çав самантра тăшман бомба тăкма пуçлать. Çав çулхинех, юпа уйăхĕнче, пиччĕшĕпе шăллĕ тепĕр хутчен курнăçаççĕ. Кимĕпе кĕçвĕç çар походне тухса кайма хатĕрленнĕ Миша питĕ салхуллă пулнине асăрхать тăванĕ. Чунĕ сиснĕ-ши, шăллĕпе сыв пуллашнă май тăрук çапла калать асли:

– Атя-ха, Вася, калаçса татăлатпăр, енчен те эпĕ таврăнаймасан хăвăн ывăлна ман ята пар. Енчен те санпа мĕн-тĕр пулсан, эпĕ хамăн ывăла Василий ят хурăп.

Сыв пуллашаççĕ, шел те, ĕмĕрлĕхех. Миша таврăнаймасть, ку хутĕнче нимĕç фашисчĕсем субмаринăна путараççĕ. Тăшманăн темиçе экипажне тĕп тума хутшăннă Михаил Игнатьева виличченех Ленин орденĕпе наградăлаççĕ.

Пилĕк ывăлран виççĕшĕ çеç таврăнать вăрçăран. Йывăр аманнă Иван киле çитсен нумай та пурăнаймасть. Василий пиччĕшĕн сăмахне асран кăлармасть, авланса çемье çавăрать. Ывăл çуралать. Ăна Миша ят параççĕ. Халĕ Шупашкарта пурăнакан Михаил Васильевич музея чылай документпа пулăшнă, вырăн сахалрах пулнăран йăлтах вырнаçтарма та май килмен. Ашшĕн кĕпине, çырăвĕсене курма май пур. Ашшĕн тата куккăшĕсен паттăрлăхĕ çинчен сехечĕ-сехечĕпе каласа пама хатĕр Михаил Игнатьев.

Игнатьевсем шкулта лайăх вĕренни, тăрăшуллă пулни вăрçăран янă виç кĕтеслĕ хыпарсенчен те курăнать. Хитре почеркпа, пĕр йăнăшсăр шăрçаланă, чуна пырса тивекен çырусене вулама та май пулчĕ куравра.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсенче пирĕн республикăра 18 ача çурчĕ хута кайнă. Вĕсенче вăрçă пыракан тăрăхсенчен эвакуаци шучĕпе куçарса килнĕ виçĕ пин ачана вырнаçтарнă. Çав шутран 380-шĕ – Нева хĕрринчи хуларан. Ишекри, Кÿкеçри ача çурчĕсенче блокадăри Ленинград хулинчен килнĕ çĕр-çĕр ача хÿтлĕх тупнă. Унка лекнĕ хулари ачасене Нева шăнман чухне – çар карапĕсемпе, пăр ларсан машинăсемпе куçарнă. Нимĕç самолечĕсем вĕсем çине пĕр шелсĕр бомба тăкнă. Антонина Бургулова шăпах салтаксем валли çул картти хатĕрлекенни пулнă. Стенд çинче унăн тата эвакуаципе Чăваш Ене килнĕ ачасен сăн ÿкерчĕкĕсене курма пулать. Тăлăхсен куçĕсенче – хурлăх, куççуль...

Ан тив, куравра стенд нумаях та мар, анчах та кунта Ленинград хулин тата унта пурăнакансен, пирĕн ентешсен вышкайсăр паттăрлăхĕпе вилĕмсĕрлĕхĕ сăнланнă. Чи хăрушă та юнлă блокада чуна çÿçентерет, куççуль кăларать.

**Елена ГЛУХОВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ

# Сирĕн шалу... мĕн тĕслĕ?

Ĕç шыраканăн пуçĕнче вун-вун ыйту, чи пĕлтерĕшли – шалу. Вăл мĕн чухлĕ пысăкрах çавăн чухлĕ лайăххах-çке! Анчах шалу тĕсĕ... тĕрлĕрен пулать. «Хури» /фирма кассине кĕмесĕр çаврăнакан чĕрĕ укçа/ халĕ, телее, манăça тухрĕ. Ĕçе вырнаçма кайсан «шурă» е «сăрă» шалу сĕнекен пур халĕ: «шурри» – бухгалтери мĕн пур тӳлеве шута илекенни, кашни тенкĕрен налук куçараканни. «Сăррипе» ĕçлекенсем тупăшăн пĕчĕк пайне кăна кăтартаççĕ, çапла майпа налук тӳлемесĕр чылай перекетлеççĕ. Анчах ултав çиеле тухсан предприяти пуçлăхĕпе тĕп бухгалтера уголовлă майпа явап тыттарас, пысăк штраф /300 пин тенкĕ таран/ тӳлеттерес хăрушлăх пур.

«Шурă» шалуран кăна социаллă пособисем тӳлеççĕ, банксемпе лавккасем ăна кура кредит пaраççĕ. Чи кирли – пенси валли укçа тĕрĕс-тĕкел пухăнса пыни. Чăн та, пысăк укçашăн çунакан кун пирки пуça çĕмĕрмест. Ватлăх аякра пек туйăнать те... Шел, туйăнать кăна çав. Çавăн чухне тин чавса çывăх та çыртма çуккине туйса илетпĕр. Теветкеллĕхĕн тепĕр енĕ те шиклентерет: «конвертпа» укçа пама сасартăк пăрахсан мĕн тумалла-ха? Пуçлăх сăмахне çирĕп тытасса кам шантарĕ? Отпускшăн та, чирленĕшĕн те «шурă» пайран кăна шутласа параççĕ. Çапла вара «конвертри» шалăва пула ĕç çынни кăна мар, патшалăх та шар курать, бюджета миллионĕ-миллионĕпе налук кĕреймест.

«Пуçлăхпа хирĕç-тăруллă самант сиксе тухсан кăна çынсем тĕрĕслĕх шыраса килеççĕ. Анчах кун пек чухне саккун та пулăшаймасть: ĕç килĕшĕвĕнче кăтартнă суммăна кăна шыраса илме пулать», – пĕлтерчĕ Чăваш Енри патшалăх ĕç инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ Раиса Павлова кăрлачăн 28-мĕшĕнче иртнĕ пресс-конференцире. ЧР Информполитика министерстви йĕркеленĕ мероприятие надзор тата право хуралĕн, налук службин, пенси фончĕн ĕçченĕсем хутшăнчĕç.

«Ĕç укçине çав тери сахал тӳлекен, вăл шутра – чи пĕчĕк виçерен те /5250 тенкĕ/ катăкрах, 2770 ытла предприятие шута илнĕ пĕлтĕр. Вĕсен ертӳçисемпе уйрăммăн калаçнă, лару-тăру сăлтавне тĕпченĕ. Çакăн хыççăн чылайăшĕ ĕçченĕсен шалăвне ӳстернĕ», – палăртрĕ Раççей налук службин Чăваш Енри управленийĕн пай пуçлăхĕ Татьяна Архипова.

Пресс-конференцире пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкне тара панăшăн налук шыраса илес ыйтăва та хускатрĕç. Паянхи кун республикăра 1 пине яхăн çын хваттер тара панăшăн налук тӳлесе тăрать, çакăнтан бюджета 5 миллион тенке яхăн тупăш кĕрет. «Пирĕн республикăри лару-тăру ку енĕпе ытти регионтинчен чылай лайăххах», – тесе палăртрĕç. Ку бизнесра пысăк укçа çаврăнать, анчах унран хырçă пурте тӳлени иккĕлентерет. «Сехетлĕхе, талăклăха хваттер сĕнсе пĕлтерӳ параççĕ хаçата. Çавсене тĕрĕслетĕр-и эсир?– «Чăваш хĕрарăмĕн» корреспондентне те кăсăклантарчĕ ку ыйту. «Пĕлтерӳсене куçран вĕçертместпĕр. Предприниматель саккунпа килĕшӳллĕн ĕçлет-и е çук-и – çакна уçăмлататпăр», – пĕлтерчĕ ЧР ШĔМĕн участок уполномоченнăйĕсен ĕçне йĕркелесе пыракан тата çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделенийĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ Олег Тевянов. Прописккăра йышлăн тăракансем те иккĕлентереççĕ-мĕн. Пĕлтĕр 15 адреспа тĕрĕслев ирттернĕ, пĕр хваттер хуçи тĕлĕшĕпе уголовлă ĕç пуçарнă. «Хваттер тара паракансем общество умĕнче хăрушлăх кăларса тăраташĕ, уйрăмах – ют çĕр-шыв çыннисемпе çыхланакансем. Вăхăтлăха пурăнма килекенсем кӳршĕсен лăпкăлăхне пăсни те час-часах тĕл пулать», – çирĕплетеççĕ йĕрке хуралçисем. Çакăн евĕр тĕслĕх асăрхасан çийĕнчех полиции пĕлтермелле. Налук инспекцийĕ те 30-27-89 телефонпа шăнкăрав йышăнать. Çак номерпех «сăрă» шалу тӳлекенсем, саккунлă мар майпа хваттере тара яракансем пирки систермелле.

**Алина ИЗМАН.**




ЙĂЛТ АСРАХ

# Асанне арчи

Милĕк касса килнĕ кун пирĕн килте яланах уявччĕ. Пурте пĕрле пухăнса туслăн çыхаканччĕ ăна. Ĕçе пуринчен малтан асанне пикенетчĕ. Каçхине вара мунча хутса çĕнĕ милĕкпе çапăнаканччĕ. Халĕ те çемьере çав йăлана пăрахман. Шел, асанне кăна çук. Милĕк пуçласа çыхаканни анне халь. Варрине матрӳшке, сар çип ути, эмел курăкĕ хурса хăварать. Пиçĕхтерсе лартнă хыççăн калама çук ырă шăршă сарăлать мунчара. Кăçал та çаплах, пурте пĕрле туслăн, шăкăлтатса ĕçленĕ май, çыхса пĕтерни сисĕнмерĕ те. Милĕкне пусмапа мачча çине хăпартса çакма мана шанчĕç. Типтерлĕ çав анне, кунта та мĕн пур япала хăй вырăнĕнче. Кашнин хăйĕн вăхăчĕ. Сиплĕ курăксене хĕл валли типĕтме те ĕлкĕрнĕ, çыхăсене ретĕн-ретĕн çакса тухнă. Кăçатăсене хаçатпа чĕркесе кĕве çиесрен эрĕм ути хушшине хунă. Асаннен кивĕ сенкер арчи те пĕр кĕтесре вырăн тупнă. Ун çийĕнче – пиртен тĕртсе тунă малтанхи çивиттиех.

Ас тăватăп-ха: эпир пĕчĕк чухне асанне ăна кунне миçе хутчен уçса хупмастчĕ-ши? Хăйĕн вырăнĕ патнех лартса хунăччĕ. Укçи-тенки, йĕппи-çиппи, çăмхи... йăлтах çав арчарачĕ. Унран хаклă тупра пулман та уншăн. Качча тухас умĕн ашшĕ ăсталаса панăскерĕн пĕр кĕтесне «1937 çул» тесе чĕрсе хунăччĕ. 77 çул каяллахи арча халĕ те кивелсе юрăхсăра тухман. Пире, вĕт-шакăра, асанне арчи патне çывăха ямастчĕ. Кăмăлĕ лайăх чухне мана вăрттăн чĕнсе илетчĕ те сурпан çаккисемпе шӳлкемесем, масмаксем кăларса кăтартатчĕ. «Сан валли, хĕрĕм, пĕр сан валли упратăп çаксене», – тетчĕ. Унтан тата вилĕмлĕх хатĕрленĕ çыххине салататчĕ. Çав самантра пăрахса тарас килетчĕ те чăтса тăраттăм. Асаннене кӳрентерес килмест-çке. «Эпĕ вилсен мана çак тумтире тăхăнтартса вырттармалла», – тесенех пит çăмарти тăрăх куççуль пăт! пăт! тумлама пуçлатчĕ. Асанне вара тӳрех лăплантарма васкатчĕ. «Эпĕ нумай пурăнатăп, ан йĕр, вăрăм ĕмĕрлĕ эпир, сĕр çула та çитĕп-ха», – тесе саппун кĕсйинчен ал тутри кăларса куçа шăлатчĕ.

Пĕррехинче тата, килте никам та çук чухне, арчинчен сарă хутсем туртса кăларчĕ. «Вуласа пар-ха, хĕрĕм, аслăçун çырăвĕсем кусем», – тесе мана тыттарчĕ. Хăй кăмака çумне тĕршĕнсе ларчĕ. Чернилпа çырнă май вырăн-вырăн лайăххах курăнмастчĕ те, çапах та асаннене вуласа пама тăрăшаттăм. Тăшман вăйлансах пыни пирки çырать асатте. Асаннене ывăлĕпе хĕрне лайăх пăхма, ăшă тăхăнтартса çӳретме хушать. Тепĕр çырăвĕнче тата, вăрçа ăсаннă хыççăнах, 1941 çулхи кĕркунне, ялтан çичĕ çухрăмри Нагадак патĕнчен пуйăспа иртсе каясси пирки пĕлтерет. Май пулсан станцие тухма ыйтать çав кун. Пăхатăп та – асанне йĕрет. Ман каллех куççуль пăчăртанса тухрĕ. Вăл хăйĕн çумне ăшшăн çупăрларĕ те тата хытăрах йĕрсе ятăм.

– Куртăн-и эсĕ ăна станцăра? – куççуле чараймасăр асаннен куçĕнчен тинкеретĕп.

– Лăплан, хĕрĕм, эсĕ пĕчĕкех мар ĕнтĕ, ак мĕнле пулнă, çапла, тĕпĕ-йĕрĕпе каласа паратăп, – терĕ те калаçу çăмхине малалла сӳтрĕ. – Ивана, сан аслаçуна, юлашки хут та пулин курса юлас тесе эпĕ те станцăна тухрăм. Çичĕ уйăхри Мишăпа икĕ çулти Вальăна та пĕрле илтĕм. Никампа хăварма пулманран мар, ара, ашшĕне ачисене кăтартас килет-çке. Çул çинче мĕскĕнсем ывăнчĕç, пĕрин ĕçесси, теприн çиесси килет. Хам тата çыхă туса кучченеç – тултармăш, шăрттан, чăкăт – йăтнă. Çумăр вĕтĕртетет. Аран çитсе ӳкрĕмĕр – станци тулли хĕрарăмсемпе ачасем. Пурте пуйăс чарăнса пăртак та пулин тăрасса шанаççĕ. Кĕтекĕте кас та пулчĕ. Ачисем татăлса йĕреççĕ. Хĕвел анаспа вăрман хыçĕнчен тинех пуйăс килсе тухрĕ. Чĕре сиксе тапать. Никам та никама та илтмест. Таврара хĕрарăмсемпе ачасем кăшкăрашни кăна илтĕнсе тăрать. Пирĕн пуйăс чарăнмарĕ. Вăл çил пек, хăвăрт иртсе кайрĕ. Вакунри салтаксем уçă чӳречисенчен картусĕсемпе сулкалашрĕç, кăшкăрчĕç, шăхăрчĕç. Шăпăрлансем пуйăс хыççăн та чупанçи турĕç. Эпĕ, ним тума аптранăскер, икĕ ачана тытнă та, ухмаха ерсе кайнă пек, енчен-енне утатăп. Кайран тăна кĕтĕм-ши: уласа макăрма тытăнтăм. Ятарласа хатĕрленĕ апат-çимĕçе ас тивтерейменшĕн пушшех кулянтăм. Юрать, атте лаша кӳлсе хирĕç тухрĕ. Каялла таврăнма пĕр чĕнтĕм те вăй юлманччĕ. Тăнкăртатса килтĕмĕр çапла. Мĕскĕн ачамсем хам çумра ăшăнса çывăрса кайрĕç.

Ĕлĕкхи пек çăрапа питĕрсе хуман халь арчана. Кунта асаннен пиртен тĕртсе тунă паласĕсем, тĕррисем упранаççĕ. Акă пысăках мар çыхă. Асăрханса салтатăп ăна: хайхи сарăхса кайнă салтак çырăвĕсем. Асаннене йĕре-йĕре вуласа пани çĕнĕрен куç умне тухать. 1944 çулхи раштавра йывăр аманнă хыççăн паттăрла вилĕмпе вилни çинчен калакан çыру та пур кунта.

Асаттен шăллĕ, вăрçă ветеранĕ, чылай вăхăт прокурорта, судьяра ĕçленĕскер, пиччĕшĕн вил тăприне чылай çул шырарĕ. Хăй тĕллевне пурнăçларĕ: асанне ĕмĕрлĕхех куç хупиччен шыраса тупрех. Паттăрла салтак ячĕпе палăк та лартнă Латвире. Асанне чирлесе хĕне кайнăран унта çитсе кураймарĕ. Сăн ӳкерчĕксене курнă хыççăн: «Урăх кĕтместĕп ĕнтĕ. Халь хам каятăп ун патне», – терĕ. Ун хыççăн нумай та пурăнаймарĕ.

**Елена БАШКИРОВА.**



ПУКАШ ПУТИШĔ

# Вăрттăн калаçу

Манăн йысна – Палюк Микули – Балти тинĕсĕнче çар морякĕ пулнă. Унти «сигнальщиксен» алфавичĕпе мана та паллаштарчĕ. Кĕске вăхăтрах вĕрентĕм вĕт çавна. Малти Пукашри савнисене те çак вăрттăнлăха кăтартрăм. Линук, Муза, Валькка пĕчĕк ялавсен чĕлхине хăвăртах ăша хыврĕç.

Çуркунне çитсенех хăпарса тăраттăм хамăрăн улăм витнĕ сарай тăррине. Палăртнă вăхăтра Линук та манпа калаçма хатĕрленетчĕ. Ял хыпарĕсене çапла ун урлă йăлт пĕлеттĕм. Пĕррехинче тăратăп çапла сулкалашса лупас тăрринче. Анне пахчара ĕçлеме чĕнет. Унччен те пулмарĕ, çĕрнĕ улăм йывăрăша чăтаймарĕ. Персе аниччен кăшкăрса яма анчах ĕлкĕртĕм. Пĕçерккĕ лекрĕ вара аннерен...

Кайран хыр тăррине ятарлă пост турăмăр. Кĕр енне ыраш кĕлтин çӳллĕ капанĕсем чăрмантарма тытăнчĕç. Аптăрамарăмăр – ун тăррине хăпарса кайрăмăр. Йĕтем хуралçине Якку пиччене юмах калатараттăмăр, çав хушăра хамăр вăрттăн чĕлхепе хутшăнаттăмăр. Çапла сулкалашни харама каймарĕ курăнать – хĕсмете тинĕс çарне лекрĕмĕр...

# Пыл çирĕмĕр

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче пире, çамрăксене, хуçалăх ĕçĕсене хутшăнтаратчĕç. Йĕкел пуçтарма, çĕр улми кăларма, хăмла татма çӳреттĕмĕр. Шкулăн пĕчĕк ферминче те вăй хураттăмăр.

Пĕрре эпĕ, Петя Шиверев, Витя Шилер, Альберт Казаков пан улми сиплемешкĕн вăрман улмуççийĕ çине хăпарса кайрăмăр. Çĕньял хĕрĕсем Зина Васильева, Зоя Исаева, Манефа Леонтьева пушă витресемпе чупса çитрĕç.

Çын йывăрăшне чăтаймасăр вулли варринчен çĕрнĕ йывăç хуçăлма пуçларĕ. Петя тусăм юнашар çитĕнекен çăкаран çакланчĕ. Унăн вулли те çурмалла пайланса çĕре ӳкрĕ. Çапах та ăнăçлă сиксе анчĕ юлташ. Хăвăлтан пыл хурчĕсем вĕçсе тухрĕç те тепĕр йывăç тăррине сырăнчĕç. Çав вырăнтан пыл юхма пуçларĕ.

– Витрӳсене пушатăр! – кăшкăрчĕ Альберт. Пыл тултарма пуçларăмăр. 5 витре пулчĕ.

Тепĕр кун шкул ертӳçи Никон Иванович та строй умĕнчех тав турĕ пире. Кашнине пĕрер тенкĕ укçа тыттарчĕ. Эх, хĕпĕртерĕмĕр!

– Компот тутлăлантарма çĕнĕ пыл та илсе килтĕр, – терĕ вăл мухтаса.

**Анатолий МАКСИМОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Пĕвер салачĕ



**0,5 килограмм пĕвер, 5 çăмарта, 300 грамм шампиньон, пуçлă 2 сухан, 2 апат кашăкĕ тип çу, тăварланă 2 хăяр, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пĕвере пĕçермелле е ăшаламалла. Вĕттĕн туранă суханпа кăмпана тип çупа пăшăхламалла. Çăмартана пĕçермелле. Пĕвере, çăмартана, хăяра тăваткалласа касмалла. Çимĕçсене тăварпа, пăрăçпа, майонезпа пăтратмалла.

### Какайпа, хăярпа

**0,5 килограмм пăру какайĕ, 3-4 помидор, маринадланă 2-3 хăяр, 3-4 çĕр улми, 150 грамм сыр, майонез, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пăру какайне тăвар хушнă шывра 1,5-2 сехет вĕретмелле. Çĕр улмине пĕçермелле. Çимĕçсене тăваткалласа турасa майонезпа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла.

### Чĕлхепе, кăмпапа

**2 çĕр улми, 200 грамм сысна чĕлхи, консервланă 250 грамм шампиньон, пуçлă 1 сухан, 2 çăмарта, маринадланă 2 хăяр, майонез кирлĕ.**

Çĕр улмине, чĕлхене, çăмартана пĕçермелле. Чĕлхене – пĕрчĕлесе, шампиньона, сухана – вĕттĕн, хăяра – тăваткалласа турамалла. Çĕр улмине, çăмарта саррипе шуррине уйрăммăн теркăламалла. Кăмпапа сухана тип çупа ăшаламалла. Салата сийлесе /çĕр улми – хăяр – чĕлхе – кăмпапа сухан – çăмарта сарри – çăмарта шурри/ хумалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле. Салата укроппа илемлетме юрать.

### Сыр айĕнчи пулă

**Шăмминчен тасатнă 500 грамм горбуша, 150 грамм сыр, тăвар, пăрăç, майонез кирлĕ.**

Пулла вакламалла, унтан тăварпа, пăрăçпа йăваламалла. Çиеле майонез сĕрмелле, сыр сапмалла. Горбушăна духовкăра 30 минут пĕçермелле.

### Кăмпа катлечĕ

**Маринадланă е тăварланă 300 грамм кăмпа, 2 çăмарта, пĕçернĕ 1 стакан рис, пуçлă 1 сухан, çуршар стакан çăнăхпа сĕт, 1 чей кашăкĕ сахăр, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă сухана тип çупа ăшаламалла. Вĕттĕн туранă кăмпана суханпа, риспа, 1 çăмартапа хутăштармалла. Çак хутăшран катлет тумалла. Сĕте сахăрпа, чĕптĕм тăварпа, çăмартапа, çăнăхпа пăтратмалла. Катлетсене çак чустана чиксе кăларса тип çупа ăшаламалла.

### Печени

**200 грамм çăнăх, 100 грамм услам çу, 2 апат кашăкĕ какао, 50 грамм сахăр, 1 апат кашăкĕ хăйма, 5 апат кашăкĕ сĕт кирлĕ.**

Çимĕçсене пăтратса чуста çăрмалла. Ăна йĕтĕрлемелле. Тĕрлĕ эреш касса кăлармалла. Печение духовкăра пĕçермелле.

### Какай çаврашкисем

**600 грамм какай фаршĕ, пуçлă 1 сухан, 1 батон, 1 çăмарта, тăвар, пăрăç, 0,5 стакан сĕт, тип çу кирлĕ.**

2 касăк батона 10 минутлăха сĕте ямалла, унтан пăрмалла. Ăна фаршпа, çăмартапа, вĕтетнĕ суханпа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Батона тăваткалласа касмалла. Фарш хутăшĕнчен çаврашкасем ăсталамалла, вĕсене батонпа йăваласа ăшаламалла. Хатĕр çаврашкасене салфетка çине кăларса хумалла. Вăл ытлашши çăва туртса илĕ.

### Хăймари кальмар

**500 грамм кальмар, пуçлă 1 сухан, 1 стакан хăйма, тип çу, çăнăх, тăвар, пăрăç, укроп кирлĕ.**

Кальмара вĕрекен тăварлă шывра 3 минут тытмалла, унтан тасатмалла, çаврашкан турамалла. Тăвар, пăрăç сапмалла. Кашни çаврашкана çăнăхпа йăваламалла, тип çупа кăштах ăшаламалла.

Вĕттĕн туранă сухана пăшăхламалла, кальмар хушмалла. Çиелтен хăйма ямалла. Çатмана хупмалла та вăйсăр çулăм çинче 15 минут тытмалла. Юлашкинчен укроп сапмалла.

Хăймари кальмара çĕр улми нимĕрĕпе е риспа пĕрле лартса памалла.

### Кăмпа пĕлĕмĕ

**Ăшне хума типĕтнĕ 100 грамм кăмпа, 400 грамм пулă фаршĕ, пуçлă 2-3 сухан, 1/2 стакан тип çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Тăвар янă шыва çăнăхпа пăтратмалла, чуста çăрмалла. Типĕтнĕ кăмпана шыва пĕçермелле. Пулă фаршне, кăмпана, сухана аш арманĕ витĕр кăлармалла. Çак хутăша çатмара ăшаламалла. Сивĕнсен тин пĕлĕм тумалла.

### Шăккалат кремĕ

**5 çăмарта сарри, 180 грамм сахăр çăнăхĕ, ваниль сахăрĕ, 100 грамм шĕвĕ хăйма, 20 грамм шăккалат, 150 грамм услам çу кирлĕ.**

Çăмарта саррине, сахăр çăнăхне, шĕвĕ хăймана çăраличчен вăйсăр çулăм çинче пĕçермелле. Унтан çак хутăша услам çупа шăккалат ямалла. Крема пăтратса сивĕтмелле.

ПĔЛЕТĔР-И?

# Тусан – килçурт тăшманĕ

Килти тусанпа кашни кунах кĕрешетпĕр пулин те вăл çавçавах пухăнать. "Ăçтан тухать-ши?" – тĕлĕнетпĕр эпир. Тусан – этемĕн хăрушă тăшманĕ. Таса марланнă сывлăш пире ирĕклĕн сывлама чăрмантарать, кăмăл-туйăма япăхлатать, инфекцие сарăлма май парать. Тусан – хăрушă чирчĕр çăл куçĕ те: унта тĕрлĕ микроорганизм лайăх аталанать. Куçа курăнмансkер сывлав çулне кĕрсе вырнаçать, çавна май çынна хĕне ярать.

Тусан тĕрлĕ пĕрчĕрен тăрать: урамри хăйăр, апатçимĕç тĕпренчĕкĕ, çăм, çип татăкĕ... Чĕречерен, алăкран атă-пушмакпа, çи-пуçпа пĕрле кĕрет вăл. Çапах та тусанăн тĕп пайĕ, 70% – пирĕн ÿтрен уйрăлакан клетка. Кунне 50 миллиона яхăн клетка ылмашăнать. Вырăн çинче çаврăнкаланă, тăхăннă, утнă чухне те вистенет вăл.

Хăш-пĕр çыншăн тусан уйрăмах сиенлĕ. Сăмахран, астма /сывлăш çулĕ пÿлĕнни/ сăлтавĕ шăпах – килти тусан. Тĕрĕсрех каласан – унта пурăнакан сăвăс. Вăл ытларах кавир, минтер, матрас ăшĕнче хăйне аван туять. Кравватьре, тĕслĕхрен, вĕсен хисепĕ – 2 миллиона яхăн, анчах микроскопсăр вĕсене курма çук. Килти тусан сăвăсĕ çав тери хăрушă мар: вăл юн ĕммест, çыртмасть, ÿт ăшне кĕмест, вилĕ клетка кăна пуçтарать. Çапла вара кашни каç миллиона яхăн сăвăспа çывăрма выртатпăр, енчен енне çаврăнкаласа ăна тăрантаратпăр. Çинĕ май вăл шăрка тусанĕ евĕр вĕтĕ муклашка, унпа пĕрлех протеин кăларать. Çавсем пÿлĕм тăрăх вĕçсе ÿпкене кĕреççĕ.



Мĕнле кĕрешмелле-ха тусанпа? Чи лайăх мел – пÿлĕме уçăлтарни. Вырăн таврашне шăнтни е ăшăтни, 40 градус вĕрире сăвăс икĕ талăкран вилет. Хĕвел пайăркит те аван пулăшать. Кивĕ матраса, минтере улăштармалла. Тĕк вырăнне синтепон суйлăр. Урай çунă чухне шыва кăштах тăвар хушăр. Пÿртре çÿремелли тапăчкине уйăхра пĕрре уксус эссенцийĕпе дезинфекцилĕр. Полиэтилен хутаçа уксус тумлатăр та тапăчкине унта чиксе хурăр, темиçе минутран кăларăр.

Полировка сĕтел-пукана, паркета ăшă шывпа тата 10 процентлă глицеринпа нÿретнĕ татăкпа сăтăрмалла.

Çемçе сĕтел-пукан, матрас, утиял, тумтир... тусан чылай "çăтать". Хутран-ситрен вĕсене те уçăлтармалла. Урама илсе тухма май килмесен килтех тасатмалла. Простынь пысăкăш татăка йĕпетсе /1 литр шыва 1 апат кашăкĕ уксус ямалла/ диван е кресло çине витмелле. Тусан шаккамалли хатĕрпе хуллен çапкаламалла. Вараланнă пусмана чăхесе илмелле те каллех уксус хутăшĕпе йĕпетмелле, тепĕр хут шаккамалла. Ун хыççăн таса щеткăпа сăтăрмалла. Ăна апат соди ирĕлтернĕ шывра йĕпетмелле.

Кавир тусанне тăвар лайăх тасатать. Ăна сапаламалла, кайран супăнь янă вĕри шывра йĕпетнĕ шăпăрпа шăлмалла. Тăвар вараланчĕ пулсан – улăштармалла. Кавире шакканă чухне тăвар юлашки йăлтах тухса пĕтет. Пылесос та пулăшать, анчах вăл чылай сăвăса ĕмеймест, ытларахăшĕ кавиртех юлать.

Кĕнеке çÿлĕкĕ çинче те тусан чылай пухăнать. Вăхăтвăхăтăн кĕнекесене те çемçе мамăк çĕтĕкĕпе сăтăрмалла, шкапа уçăлтармалла. Савăтсапана та çав мелпех тасатмалла.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Ĕне урараn ÿкрĕ



**Ĕне пăрулань хыççăн пиллĕкмĕш кунне урараn ÿкрĕ. Ĕçет, çиет, анчах тăраймасть. Урине амантман. Мĕнпе пулăшмалла-ши выльăха?**

**З.НЕСТЕРОВА.**
Тăвай районĕ.

Ку – пăрулань хыççăнхи шалкăм /парез/. Чир юнри кальци шайĕ сасартăк пĕчĕкленнине пула аталанать. Ытларах вăл ватă тата сĕт нумай паракан выльăхшăн хăрушă. Амака пула кĕлетке температури чакать. Çийĕнчех пулăшмасан ĕне хăяккăн ÿкет. Тĕртĕм хутлатни ăна çĕкленме чарать. Ку питĕ хăрушă чир, выльăх ытларах чухне /70%/ темиçе сехетренех вилет. Хăш чухне сиплесен те /3-4%/ ĕнене çăлса хăварма май килмест.

Пăрулань хыççăнхи шалкăма асăрхасанах ветеринара чĕнмелле. Ĕнене çийĕнчех юн тымарĕнчен 250-500 миллилитр кальци глюконатне е кальци ытти хутăшне ямалла. Сипленĕ хыççăн выльăх ура çине тăрать. Тĕрĕс апатлантарни те усал амакран хăтăлма пулăшĕ. Пĕтĕ ĕнешĕн çерем ути усăллă, люцерн, клевер курăкĕсем сахалрах памалла, мĕншĕн тесен вĕсенче кальци 3-4 хут нумайрах. Çавăн пекех пăрулас умĕн 3-5 кун маларах $Д_3$ витамин препарачĕпе тĕртĕмрен укол туни те чирлес хăрушлăха чакарать.



### Пăрулань хыççăн

Пăрулань хыççăн канса илсен ĕнен çиллине ăшă шывпа çумалла, хÿрине, хыçалти урине тасатмалла. Вараланнă, йĕпеннĕ ай сарăмне типпипе, хуланнипе улăштармалла. 1-1,5 сехетрен ĕнене сумалла, пĕрремĕш эрнере – 3-4 хутчен. Чирлес хăрушлăх пур тăк малтанхи 2-3-мĕш хутĕнче йăлтах суса пĕтермелле мар.

Пăрулань хыççăн выльăхăн ĕçес килет. Лĕп шыва кăштах тăвар, хывăх ярса пани ăш хыпнине ирттерет. Çавăн пекех тăраничен çимелĕх утă хумалла. Апат виçине кунран кун ÿстерсе пымалла, талăкра 3 хутчен шăвармалла. Çилли ан шыçтăр тесен выльăха ăшă та таса çĕрте тытмалла, концентрат апат çитермелле. Кунсăр пуçне ĕнене кун йĕркине пăхăнса тĕрĕс сумалла.

Пăрăва малтанхи сехетрех сĕт ĕçтермелле. Сывă çуралнине 1-2 литр кирлĕ. Кунне 5-6 хутчен апатлантармалла. Пăру висĕ уйăх сĕтпе пурăнать, ăна амăшĕнчен тата ытти выльăхран уйрăм тытмалла. Витене вăхăтвăхăт уçăлтармалла, анчах витĕр çил лексен сыхланмалла.

КАЛА-ХА, ТĔЛĔКĔМ



**Çапăçу, хирĕçÿ –** хăвăра тытса чарма тăрăшăр, шалта капланни çиеле тухасса,

**çапăçура çĕнтерни –** кăткăс лару-тăрăва е тăшмана парăнтарасса,

**хĕрпе çапăçнине арçын курсан –** ăнланманлăха, вĕчĕрхенĕве, курайманлăха,

**çапни, вĕлеричченех хĕнени –** тулаштаракан туйăм чăрмав кÿрессе,

**йышпа çапăçни –** тăвансем килессе, кÿршĕ-аршăпа хутшăнасса,

**кушаксем çапăçни –** пăтăрмаха,

**йытăсем çапăçни –** юлташпа хирĕçессе,

**юнлă çапăçу –** çĕнĕ пурнăç пуçличчен чылай йывăрлăха парăнтарма тивессе,

**килти çапăçу –** мăшăрпа хирĕçессе,

**вилнĕ çынпа хирĕçни –** ăнланманлăха,

**арçынсем çапăçнине хĕрарăм курсан –** савни суйласси тĕлĕшпе йывăрлăх тухасса,

**хĕрарăмсем çапăçни –** тавлашăва,

**тăвансем хирĕçни –** çураçупа ăнланулăх çуккине,

**тăшманпа хирĕçни** уççăнах çапăçма тивессе пĕлтерет.





ШĂПА



# Вăхăта парăнмасть юрату

Тăвата кун тăнсăр выртнă хыççăн Павăл куçне уçрĕ. Аппарат пулăшнипе кăна сывларĕ вăл, тухтăрсем ăна укол тусах тăчĕç. Тарăн ыйхăран вăраннă арçын маччаналла тинкерчĕ. Дежурствăри медсестра врача чĕнчĕ. Тухтăр самантрах чирлĕ çын патне пычĕ, ăна тĕрĕсленĕ хыççăн: «Халĕ пурăнатăр ĕнтĕ, чи хăрушши хыçа юлчĕ», – терĕ.

Икĕ-виçĕ кунранах Павел Васильевич хăйне аван туйма тытăнчĕ, ăна кĕçех реанимацирен уйрăм палатăна куçарчĕç. Павел çар çынни пулнине медицина ĕçченĕсем чухларĕç-ха: ун патне форма тăхăннă çынсем кĕрекĕре тухрĕç, хăвăртрах сывалма сунчĕç. Полковник хăйĕнпе мĕн пулса иртнине аса илме тăрăшрĕ. Хурахсен эшкерĕ ăна вĕлерме тĕв тунă иккен: маска тăхăннăскерсем пистолетран печĕç. «Кунти тĕнчепе сыв пуллаш», – тени те хăлхарах-ха. Павел Васильевич та хăйĕн хĕçпăшалне хута ячĕ, икĕ хутчен кĕрслеттерчĕ. Кайран тăнне çухатрĕ... Сыватмăша мĕнле лекнине, ăна сакăр сехете яхăн операци тунине ас тумасть. Следователь каланă тăрăх – пĕр хураха вилмеллех амантнă вăл, тепри, суранланнăскер, чĕрĕ юлнă, виççĕмĕшне ПАИ инспекторĕсем ярса илнĕ. Перкелешӳ вырăнне часах йĕрке хуралçисем çитнĕ, вĕсем Павăла «Васкавлă пулăшупа» ăсатнă та.

Çак пăтăрмаха çакланиччен 45-ри арçын амăшне юлашки çула ăсатма хăйĕн автомашинипе çула тухнăччĕ, анчах унта çитеймерĕ вăл. Шĕкĕр турра, хăй сывă юлчĕ. Çемье çавăрма ĕлкĕрейменскер çут тĕнчере сывăх тăвансăр юлчĕ. Юратнă хĕрĕ, шкулта пĕрле вĕреннĕ Лена, пурччĕ, анчах çыхăну чылай çул каялла татăлчĕ вĕсен. Çакăншăн Павăл хăйне айăпларĕ. Савнийĕпе пĕрле ӳкерĕннĕ сăн ӳкерчĕке гимнастеркăн кăкăр умĕнчи кĕсйинче чиксе çӳрерĕ вăл. Çар училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн тĕнче касса çӳресси пуçланчĕ те унăн. Тĕрлĕ чĕлхе пĕлекенскер Кăнтăр Америкăра, Африкăра чылай пурăнчĕ. Пĕлĕвне ӳстерес тĕллевпе çар академийĕнче вĕренчĕ. Контрразведчик пулнă май тăшман та сахал мар тупăнчĕ унăн. Юрать-ха, ăна вĕлерме шухăшланă ушкăна çийĕнчех йĕрлесе тупрĕç.

Павел Васильевичăн суранĕсем ӳт илсех пычĕç. Больница садĕнче уçăлса çӳренĕ чухне унпа тĕп хирург Василий Егорович калаçу пуçарчĕ. «Пирĕн курсра Лена ятлă хĕр терапевта вĕренетчĕ, лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пыратчĕ. Вăл та шăпах сирĕн ялтанччĕ. Çамрăк чух питĕ чиперччĕ, ун пек хĕрсене каччăсем куçран вĕçертес çук. Çар училищинче ăс пухакан савни пурччĕ унăн. Халĕ Ленăна 20 çул курман ĕнтĕ. Çапах та вăл ăçта ĕçленине пĕлме пулатех», – кулкаларĕ тухтăр. «Шыраса тупсан питĕ аванччĕ те», – шухăша кайрĕ çар çынни. Сăмах вĕçленичченех хирурга чĕнсе кайрĕç. Полковник больницăра уйăха яхăн сипленчĕ. Анчах Василий Егоровичпа кун пирки урăх калаçаймарĕ вăл, тухтăр отпуска кайнăмĕн.

«Ытармалла мар илемлĕ Лена çемье телейне тахçанах тупнă ĕнтĕ», – çакăн пек шухăшласа пурăннăччĕ Павăл. Çапах та вăл больницăн тĕп терапевчĕпе Ольга Осиповнăпа калаçма шухăшларĕ. «Терапевта вĕренекенсен пĕр ушкăнĕнче Лена Петрова пуррине ас тăватăп. Мухтатчĕç ăна, мединститутран ылтăн медальпе вĕренсе тухрĕ вăл. Улттăмĕш курсра качча тухрĕ пулас, ывăл çуратнă тетчĕç ун пирки. Кайран аспирантурăна вĕренме кĕнĕ вăл. Пире тĕрлĕ республикăна, района ячĕç. Эпĕ, çемье çавăрнăскер, хуларах юлтăм. Лена çинчен пĕрле вĕреннĕ пĕлĕшсенчен ыйтăп», – шантарчĕ терапевт. Павăл ăна сăн ӳкерчĕк кăтартрĕ. Хĕрарăм тĕсесех пăхрĕ: «Ленăпа юнашар тăракан çар çынни эсир-çке... Юрĕ, пулăшма тăрăшăп сире».

Тепĕр эрнерен Ольга Осиповна полковнике хăйĕн патне чĕнтерчĕ, тӳрех çирĕп калаçу пуçарчĕ. «Çар çыннисем сăмаха çирĕп тытаканччĕ. Эсĕ вара юратнă хĕре улталанă. Хăв унăн чысне вараланă та çухалнă. Афганистана кайни пирки мĕншĕн савнине пĕлтермен?» – ыйтрĕ тухтăр. Чăнах та, салтаксене самолетпа васкавлăн ăсатнăччĕ ун чух. Кайран кун пирки хĕр патне нимĕнле хыпар та яраймарĕ вăл. «Çакăншăн эпĕ хама вĕçĕмех ятланă. Ленăна савнă пек никама та юратаймарăм, чĕрем никама та йышăнмасть-çке», – чунне уçрĕ арçын.

«Çитес эрнере сире больницăран кăларатпăр», – калаçăва пăрчĕ сасартăк Ольга Осиповна. Çак вăхăтра телефон шăнкăртатрĕ. Унăн кĕпçине илсе: «Эпир пыратпăр», – хуравларĕ тухтăр. Унччен те пулмарĕ – пӳлĕме медсестра васкаса кĕрсе тăчĕ, тĕп тухтăр хăйĕн патне чĕнтерни çинчен пĕлтерчĕ. «Хăвна йĕркене кĕрт, садра чечек татма та ан ман. Манпа пĕрле пыратăн», – асăрхаттарчĕ Ольга Осиповна Павел Васильевича. Арçын палатăна кайса çар тумне тăхăнчĕ, çӳçне тураса якатрĕ.

Тĕп тухтăрăн йышăну пӳлĕмĕнче халăх нумайччĕ. Полковникпа терапевт кĕрсенех пурте ура çине тăчĕç. Çав вăхăтра шурă çӳçлĕ, илемлĕ сăн-питлĕ хĕрарăм Павел Васильевича ыталаса илчĕ, унăн ятне темиçе хутчен те пăшăлтатса чуп турĕ, шывланнă куçне сăтăрчĕ. Унтан çар тумĕпе тăракан çамрăка чĕнчĕ: «Павел, ку – санăн ачу. Эсĕ ăна 21 çул кĕтсе пурăнтăн. Паян акă тинех...» – терĕ. Ывăлĕн юратнă хĕрĕ Оксана та кунтах иккен.

Темĕн те курнă, тӳснĕ Павел Васильевич çак самантра туйăмĕсене ирĕке ячĕ, сасси чĕтрерĕ, сăмахĕсем тытăнчăклăн тухрĕç... Ленăпа акă ăçта тĕл пулма шăпа çырнă иккен.

Пĕрле вĕреннĕ юлташсем йĕркеленĕ тĕл пулу хыççăн Ленăпа Павăл пĕрпĕринчен тек пĕр шит те уйрăлмарĕç. Кĕçех вĕсем хут уйăрттарсах пĕрлешрĕç. Ывăл çуратса ӳстернĕшĕн Павăл арăмне кунсеренех тав турĕ.

**Александр ВИШНЕВСКИЙ.**
Шупашкар хули.

АХ, АНЧАХ...

# КАПКĂНА лекнĕнех туйăнчĕ



Çĕрле шăл хытă ыратнипе вăранса кайрăм. Курăк шывĕпе çăвара чӳхерĕм, эмел ĕçрĕм – нимĕн те пулăшмарĕ. Ларса та, выртса та, макăрса та пăхрăм. Ирчченех ыйхă килмерĕ. Юратьха юлташăн стоматолога вĕреннĕ пĕлĕшĕ пур. Вăл килĕнчех бор-машина лартнă та укçа çапать анчах.

Патшалăх поликлиникинче шăл тухтăрĕ патĕнче черетре ларма хăнăхнă эпĕ, хальччен сывлăх сыхлавçин килне пулăшу ыйтса кайман. Ку хутĕнче урăхларах лару-тăру – ыратнине чăтма çук. Çавăнпах малтан юлташпа, кайран унăн пĕлĕшĕпе телефонпа çыхăнтăм. Ун пек чухне, чăнах, укçа та шел мар – нимĕн те ан канăççăрлантартăр çеç.

Шăл тухтăрĕ манпа ăшшăн калаçни килĕшрĕ. Алăран тытса кресло çине лартрĕ. Тепĕр тесен, асамçă пекех туйăнчĕ вăл. Ыратни самантрах иртрĕ.

Тепрехинче татах тĕл пулма калаçса татăлтăмăр. Манăн шăтнă шăлсене йĕркене кĕртме сĕнчĕ те...

Çав кун ĕçрен маларах тухса тӳрех унăн килне вĕçтертĕм. «Тахçанах кĕтетĕп», – терĕ вăл мана курсанах. Хĕвел пекех йăл-ял çиçрĕ хайхискер. Иртнинче шурă кĕпепе шăлавар тăхăннăччĕ вăл, халĕ темшĕн чăлпар халат уртса янă. Тахçанах кĕтет пулсан çи-пуçне мĕншĕн улăштарман-ши? Ыйту хуравне шыраса пуçа ыраттармарăм. Маншăн пулсан хăть те мĕн тăхăнтăр. Килте вĕт вăл. Э... çук иккен, йăнăшнă эпĕ. Шăтăк шăла сапласан хам та сиссе юлаймарăм – пĕшкĕнчĕ те чуп тумах пуçларĕ арçын. Хыпашлама хăтланать тата. Халат пиçиххине салтма пуçларĕ. Вăт тĕлĕнтермĕш – кун пеккине курманччĕ вара. Аранах кресло çинчен тăрса чупрăм. Вăл та манран юласшăн мар. Ау-уй, тарса ӳкĕп-и?

«Манпа юлсассăн шăл юсанăшăн укçа та илмĕп», – çаплах ыталасшăн шăл тухтăрĕ. Арăмĕпе ачисем ăçта çӳреççĕ-ши? Кафене кĕрсе ларнă-ши ĕнтĕ? Вĕсем килсе çитсе кĕрсенех кил хуçи ман çумран хăпĕччĕ. Кур-ха, мăшăрне улталасси ним те мар иккен ку арçыншăн.

«Эпĕ пушă вăхăта ют арçынсемпе мар, упăшкапа, ачасемпе пĕрле ирттерме хăнăхнă. Халĕ те киле васкатăп», – сумкăра енчĕк ширанă май ăнлантартăм ăна. Пĕтĕм укçана сĕтел çине кăларса хутăм та алăк еннелле утрăм. Пур пĕрех кăларса ярасшăн мар шăл тухтăрĕ. «Чей е эрех ĕçтермесĕр утăм та пустармастăп», – алăранах ярса тытрĕ сарлака хулçурăмлăскер. Те сиввĕн пăхнăран, те вăрçăнма пуçланăран пăрăнса утрĕ вăл? Кухньăна кĕрсе кайрĕ. Эпĕ хăвăрт тумланса урама тухрăм. Капкăна лекнĕнех туйăнчĕ вĕт.

«Шăл ыратсан ыйхă вĕçнине халĕ хам та пĕлетĕп. Пĕрре çĕр варринче такси тытсах пĕлĕш патне вĕçтерессĕнччĕ. Анчах шăл тухтăрĕ арăмĕпе мар, урăх хĕрарăмпа пурăнать иккен. Телефона сӳнтерсе хунă. Унпа ниепле те çыхăнаймарăм», – терĕ юлташ ăнсăртран тĕл пулсан.

Çав хĕрарăм та килех пынă пуль-ха. Унăн шăлĕсене, ахăртнех, çав арçын тӳлевсĕрех сапласа янă...

Ясар çав арçын халĕ те ыттисем çумне çулăхать-ши?

**КАТЕРИНА.**

ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

*Маргарита ПРОКОПЬЕВА*

## Телей çиççе пăхать куçран

Телей çиççе пăхать куçран.
Хĕрелчĕ шуçăм тухăçран.
Куç умĕнче хĕлхем çунать,
Малашлăх ыр кун-çул сунать.

Телей çунса пăхать куçран.
Тухса курман эп шанăçран.
Юнашар пур ăнланакан,
Çумрах çӳрет ман упракан.

Телей савса пăхать куçран.
Сĕткен ĕçетĕп çăл куçран.
Йышра нумай хӳтĕлекен,
Çĕр-шыв вăйне ӳстерекен.

Телей шевли вылять куçра.
Илем шыратăп пурнăçра.
Туптаннă çар хĕсметĕнче
Савни те, ывăл та, пичче.

Телей хĕмне сапать куçран,
Ыр шухăшсем тухмаç пуçран.
Асран тухми çĕр-шывăмра,
Таса ят юлĕ халăхра.

Телей çиççе пăхать куçран,
Хĕвел çутатрĕ тухăçран...

Вăрмар районĕ.

АС ТĂВĂМ

# Сăмахне каларĕ те уйрăлса кайрĕ



**Çак эрнере Шупашкарти литература музейĕнче Чăваш халăх писателĕ Лаврентий Таллеров çуралнăранпа 85 çул çитнине халаллаласа асăну касĕ иртрĕ. Унăн çывăх çыннисем, юлташĕсем, пултарулăхне сума сăвакансем пуçтарăнчĕç. «Чĕре хушнипе» курав Лаврентий Васильевичăн кун-çулне куç умне кăларма пулăшрĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр аса илӳ унăн ячĕ çакăнта пуçтарăннисен чĕринче упраннине çирĕплетрĕ.**



Çыравçăн «Çăлтăр витĕр çул курăнать», «Шеремет», «Майра» романĕсене, «Пĕчĕк çеç путене», «Юхать юхан шыв», «Сăпка юрри», «Шавласа çулçă тăкăнать», «Савнă Селиме» повеçĕсене, «Ĕçченсем», «Хурăн шывĕ» калавсен пуххине халăх юратса вулать. Хастар писатель пĕлтĕр çĕре кĕриччен калеме алăран яман.

Лаврентий Таллеров «Октябрь ялавĕ» хаçат, «Тăван Атăл» журнал редакторĕнче ĕçленĕ. Çавнашкалах Чăвашрадио итлекенĕсем, «Коммунизм ялавĕ» хаçат вулаканĕсем ăна лайăх пĕлеççĕ.

«58 çул пĕрле пурăнтăмăр. Пĕрпĕринпе сасă хăпартса калаçса курман», – терĕ унăн мăшăрĕ Роза Александровна. Лаврентий Васильевичăн ĕçĕсенчи сăнарсем мĕнле çурални çинчен каласа кăтартрĕ вăл. Упăшки юрра-ташша юратнине аса илчĕ. Ахальтен мар Комсомольски районĕнчи Нĕркеç каччи артиста вĕренме тĕллев тытнă. 7-мĕш класс хыççăн Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çумĕнчи студие килсе пăхнă вăл. Анăçман ун чухне ял ачине. Сĕтел çине пӳрнепе çапса кăларнă кĕвĕ çеммине пĕлеймен Лаврентий Таллеров. Çапах та ялти клубра хатĕрлекен спектакльсенче тĕп сăнарсене выляма пăрахман çамрăк.

Лаврентий Таллеров çынлăха çухатмасăр ĕçленине, халăхăн нушипе савăнăçне чĕре витĕр кăларнине, ял-йыш çинчен нумай çырнине палăртрĕç асăну каçне хутшăнакансем.

«Çăлтăр витĕр çул курăнать» романа атте вуласа тухма, тишкерме сĕнчĕ. Пирĕн тăрăх çинчен çырни те пур унта. Комсомольски районĕнчи пĕр купса шăпах Канаш тăрăхĕнче çĕр тытса тăнă. Çак романпа паллашнă хыççăн историе тĕпчес туртăм çуралчĕ», – каласа кăтартать ЧР Профессионал писательсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Сергей Павлов. Шупашкарти пĕр урама ун ятне пама ыйтса хула администрацине çыру янине пĕлтерчĕ.

«Лаврентий Васильевичпа çывăх хутшăнни – чыс маншăн, – калаçăва тăсрĕ филологи ăслăлăхĕсен тухтăрĕ Юрий Артемьев. – Сăмахпа сăмах çыхăнтарса хĕлхем кăларма пĕлетчĕ çав вăл. Хăйне нихăçан та пропагандăламан. Çын пирки сахал калаçатчĕ. Хăйĕн сăмахне каларĕ те уйрăлса кайрĕ. Ыттисене валли пуян еткер хăварчĕ».

«Маншăн атте, пичче, вĕрентекен вырăнĕнчеччĕ вăл», – çирĕплетет Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Денис Гордеев. «Октябрь çулĕ» хаçатра Лаврентий Таллеровпа пĕрле ĕçленĕскер редакци валли мотоцикл илнине аса илчĕ. Унччен хаçат ĕçтисем районта çуранах урлă та пирлĕ хутланă. Хаçат редакторĕ Лаврентий Васильевич никама та выговор паманнине, премисĕр хăварманнине палăртрĕ. «Те Каçал çĕр хăвачĕн, те самана хăйне евĕрлĕхĕн витĕмĕпе – редакци ĕçченĕсенчен 7-8-шĕ çыравçăсен йышне кĕчĕ», – терĕ Денис Викторович.

Ева Лисина çыравçă Таллеровсен йăхне лайăх пĕлет. Лаврентий Васильевичăн йăмăкĕпе Олимпиадăпа çамрăк чухнех туслашнă вăл. «Эпĕ Мускавра пурăнаттăм. Шупашкара килсен Володарски урамĕнчи редакцисене кĕрсе тухаттăм. Пĕрре çапла ал çырăвĕсене чиксе тухнăччĕ. Урампа пынă чухне яштака арçын вĕçтерсе килнине курах кайрăм. Пăрăнса тăрсах сăнарăм ăна. Унăн утти, сăнĕ, костюмĕ халĕ те куç умĕнче тăрать», – сăмах илчĕ Ева Николаевна. Çакăн çинчен юлташне Олимпиадăна каласа кăтартнă хĕр. «Вăл манăн пичче Лаврентий кăна пулма пултарать», – лару-тăрăва уçăмлатнă йăмăкĕ. Çак тĕл пулу Ева Лисинăн ăстăнĕнче ĕмĕрлĕхех çырăнса юлнă. Кайран пиччĕшĕ Геннадий Айхи: «Пĕтĕм Шупашкар Лаврентий Таллеровăн кĕнекисене вулать, эсĕ те тупса ил», – тенĕ. Мускава кайсан Ева Лисина патĕнче чăрăннă çыравçă. «Пĕррехинче ăна вокзала ăсатса яма пуçтарăнатпăр. Çав тери хыпаланатпăр хамăр. Вăл вара пире лăплантарас тесе çул тăршшĕпех кулăш каласа пачĕ», – чунне уçать Ева Николаевна.

Юлия Силем çыравçă Лаврентий Таллеров хăйĕн «Шеремет» романне «Ялав» редакцине илсе пынине манман. «Вăл хăйĕн ĕçне вуласа тухма васкатман, редакцие кĕре-кĕре йăлăхтарман. «Ыйту çуралчĕ тĕк – шăнкăравлăр», – тетчĕ. Ăшă сăмах каласа хавхалантарма ӳркенместчĕ», – палăртать Юлия Александровна. Кĕнекисене парнеленĕшĕн Лаврентий Таллерова халĕ те тав тăвать вăл.

Каçал ентешлĕхĕн ертӳçи Александр Капитонов Комсомольски районĕнчи библиотекăсенче Таллеров кунĕсем йĕркеленине палăртрĕ. Çакă çамрăк ăрăва унăн пултарулăхне тишкерме пулăшĕ. Александр Петрович чăваш йăлипе Лаврентий Васильевичăн мăшăрне тутăр парнелерĕ.

Виталий Станьял ăсчахпа Чăваш халăх çыравçи Лаврентий Таллеров «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пĕр пӳлĕмре хире-хирĕç ларса ĕçленĕ. Пурнăç пирки чылай калаçнă, паллах, иккĕшĕ. «Чи лайăх повеçĕсене корректор пӳлĕмне питĕрĕнсе ларса çырчĕ. Йĕркесене хирĕç хаяр калаçатчĕ. Çакăншăн чунĕ çунса тухатчĕ унăн. Çын хуйхине ăш витĕр кăларатчĕ», – пытармасть Виталий Петрович. Çавнашкалах унăн ĕçĕсене шкул программинчен кăлармалла марри, çырнисен пуххине çĕнĕрен пичетлемелли çинчен каларĕ вăл.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕнче ĕçленĕ Демьян Семенов Лаврентий Таллерова шукăль çӳренĕрен Мускав артисчĕпе те танлаштарчĕ. Чăваш артистсен пурнăçĕ çинчен очерксен ярăмĕ хатĕрленĕшĕн вăл Çемен Элкер премине тивĕçнине аса илчĕ. Лаврентий Васильевича кашни ĕçе тĕплĕ тунăшăн мухтарĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ПУЛТАРУЛĂХ

# Сăвă-юрăпа хавхаланса

Чылайранпа пĕлетĕп ăна. Çул çинче тĕл пулсан каçса кайсах сăмах пухмачне пушататпăр вара: вăл хăйĕн ĕмĕт-шухăшне каласа парать, эпĕ те чуна уçатăп.

Аллăмра Валентина Христофоровăн «Аманнă акăш» кĕнеки. Хайлавсене çак ятпа пĕрлештернинче хăйне евĕр пĕлтерĕш пытаннă. Кӳлĕ çийĕн акăшсем тӳпене вĕçсе хăпараççĕ. Анчах вĕсенчен пĕри, хуçăк çунатли, шел те, çĕкленеймест, çапах малаллах талпăнать – ыттисенчен юласшăн мар ĕнтĕ. Валентина Николаевна хăйĕн шăпине аманнă çак акăшпа сăнарлать: ашшĕ-амăшĕ тахçанах çĕре кĕнĕ, упăшкипе те чылай пурăнайман – чĕре чирĕпе аптранăскер çамрăклах вилнĕ, ывăлĕ Эдик та халĕ пирĕн хушăра çук. Кĕнекери висĕ акăш çӳлерех асăннă çывăх çыннисене аса илтерет. Ку вара, вĕçейменни – Валентина хăй. Хĕрарăм йывăрлăха парăнмасăр пур инкеке те чăтать, тӳсет, малалла талпăнать. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче килнĕ вăл çут тĕнчене. Вăрмар районĕнчи Тупахра çуралнăскер /хĕр чухнехи хушамачĕ Виноградова/ юратнă ĕç тивлечĕпе малалла хавхаланулăн та ăнтăлуллăн утнă. Кӳршĕ ялти вăтам шкултан вĕренсе тухсан Шупашкара çул тытнă. Пĕр вăхăт пир-авăр станокĕ умне тăма тивнĕ. Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче агроном специальноçне алла илсен тăван тăрăхра çĕр пулăхне ӳстермелли майсем шыранă.

Кун-çул пархатарĕпе пĕрлех хуйхă-суйхă та сахал мар кӳнĕ, чун-чĕре ыратăвне тăварлă куççульпе çума тивнĕ. Хурлăхлă вăхăтсен йĕрĕсем сăн-питре çырăннă. Хăй паян та «Каялла ан чак, чăт, тӳс!» девизпа хавхаланса ĕçлет. Пулăшу ыйтакана яланах тараватт йышăнма, пулăшма хатĕр вăл, халĕ те халăхпа пĕрле, пĕр çыхăра. Пушă вăхăт тупăнсанах сăвăсем шăрçалать маттур хĕрарăм. Хайлавĕсем республикăри хаçат-журналта кун çути кураççĕ. «Çав йĕркесем хăйсемех кĕвве çавăрнаççĕ», – тет вăл. Унăн пултарулăхĕнче юрату пысăк вырăн йышăнать, çӳлелле çĕклекен хĕрӳллĕ те сăвапла туйăм витĕмĕпе хавхаланса çĕнĕ хайлавсем çырать.

«Çăмăл тетĕр-и пĕччен?
Пилсĕр пурнăç çулĕ.
Хурлăх пуснă куççенчен
Йăрлатать куççулĕ», – йĕркесем тăлăх арăмăн чун ыратăвне уçса параççĕ. Çынсен тӳнтерле пурнăçне сивлет сăвăç, эрехсăрапа, пируспа айкашса сывлăха пĕтернине, ытти киревсĕрлĕхе те хăюллăн питлет:
«Ытлă-çитлĕ пурăнаççĕ,
Ĕçлемесĕрех пуяççĕ,
Юхтараççĕ сăмакун,
Хакĕ ӳсет кунран-кун».

Валентина Николаевнăн мăнукĕ Наташа та сăвă çырма ăста пулнине палăртаççĕ Пысăк Енккасси шкулĕн вĕрентекенĕсем. Эппин, çĕре вăраннă вăрлăхран парка калча шăтнă теме пулать. Иккĕшĕн те калемĕсем çивĕчленсех пыччăр, поэзи варкăшĕ çынсен чун-чĕрине кĕрсе вырнаçтăр.

**Николай ИСАЕВ.**
Вăрмар районĕ.

СĂВĂ СĔВЕМĔ

**Галина КĔМĔЛ**

* * *

Кăн-кăвак çулăмпа эс пăхатăн,
Куçусем илĕртеççĕ мана.
Пирвайхи хут паян
эс каларăн:
– Тахçанах юрататăп сана.

Чĕрене вирхĕнсе кĕрсе юлчĕ
Чи асамлă, чи кĕтнĕ сăмах.
Самантрах пур тĕнче йăл!
çуталчĕ.
Ик чĕре хушшинче чăн çăтмах.

Ыталатăп сана, ачашлатăп,
Вут хыптарчĕç вĕри тутусем.
Кăн-кăвак авăра эп путатăп,
Чунăмра юрату хумĕсем.

Юрататăп сана, юрататăп...
Тыткăна илчĕ висĕ сăмах.
Тепĕр хут каласам, эп ыйтатăп.
Юратсан пурăнма çăмăлрах.

* * *

Юлташ теме сана хăймастăп,
Ман чун савни те эсĕ мар.
Хам асăрра сăнна тытмастăп,
Сана та эпĕ кирлĕ мар.

Анчах та мĕншĕн тĕл пулсассăн
Сикет чĕре пĕр чарăнми?
Туятăп, эсĕ те сăнатăн,
Пăхатăн пĕр куç сиктерми.

Сан куçунта кун-çул хĕлхемĕ,
Сассу сан савăнăç юрри.
Санпа пĕрле тĕнче илемĕ
Асамлă юрату тĕрри.

Самантлăх çеç, пĕр харăс иккĕн
Сикетпĕр тĕпсĕр авăра.
Хумсем пире çапаççĕ вичкĕн,
Эпир санпа пĕр юхăмра.

* * *

Савнă ялăм, юратнă Элшел,
Эсĕ манăн чунри сар хĕвел.
Кашни ят, кашни сăн, япала
Асăмра, чĕрере, манпала.

Куç тулли иксĕлми сăнарсем:
Кил-çуртсем, сарлака урамсем –
Арманкас, Тутаркас, Хыçалкас,
Чиркӳкас, Вăрманкас, Çерçикас...

Кĕскерех урамсем: висĕ кас –
Шăмăршăкаспалан Чĕлĕмкас.
Илĕртет хăй патне Шаккаман,
Ку касра тахçанах эп пулман.

Йăмăх-симĕс выртать анлă Шур,
Ах, ăçта ун пекки тата пур?
Ял тавра уй-хирсем, çарансем,
Сĕм вăрман, ытарми
вырăнсем.

Раккасси патĕнче Хурăн вар,
Пĕр çырма, пĕчĕкскер,
тарăн мар.
Чăнлă шывĕ юппи – Шур хĕрри,
Пит аван-çке кунта
вăл пурри.

Хуран хăлăп лаппи пур тата,
Усал вăй айкашать çакăнта.
Имĕш, вăл сырăнать çын çумне,
Тухатлать, çавăрать ун пуçне.

Сĕверен шыв илет Этремен,
Савăнать унпалан Мĕртлĕ ен.
Ес кӳль шывĕ асамлă иккен,
Этеме сыватать чир-чĕртен.

Сĕвене юрататăп чунтан,
Сĕвепе мухтанатăп ялан!
Çĕрĕм-шывăм – Элшел,
сапăр пул!
Капăрлан, чечеклен
çулран-çул.



# «Арçын пуçне çавăрма пĕлетĕп эпĕ...»

## Пукане

**– Эсир Леонид Филатовпа пĕрле ўкерĕннĕ "Экипаж" фильм нумай çул совет кино историйĕнче чи эротикăллă сцена шутланнă...**

– Ăна мĕнле ўкернине халĕ те ас тăватăп. 1979 çулхи хĕлле. Урамра 42 градус. "Мосфильм" павильонĕнче те – тăм илмелле сивĕ. Шăплăхра манăн шăл шаккани кăна янăраса тăрать. Фильм режиссерĕ Митта çав самантра ман пата пырать те: "Саша, эпир хатĕр, хывăнма пултаратăр", – тет...

Фильм экрансем çине тухсан мана нумайăшĕ сивлерĕ – мĕнле майпа çарамасланма пултарнă эпĕ халăх умĕнче? Анчах та ку ман пĕрремĕш роль вĕт-ха, çитменнине, тўрех – тĕп выранта. Вăтанма мар, Митта мана тĕп рольте çирĕплетсен çиччĕмĕш тўпене çити вĕçме хатĕрччĕ эпĕ. Малтан Данелия патĕнче "Осенний марафон" фильм валли тĕрĕслерĕç мана. Данелия тиркерĕ. Коридора тухсан уласа макăртăм. Тĕлĕнмелле те, эпĕ куççульпе çăвăнни... инçех мар иртсе пыракан Миттана килĕшсе кайнă. Каярахпа çакна пĕлтĕм. Стюардесса рольне маларах Елена Проклована çураçнă-мĕн. Çирĕплетнĕ те. Анчах та вăл ўкерĕнме килĕшмен. МХАТра шăп çав вăхăтра питĕ нумай спектакльте вылянăран унăн вăхăчĕ пулман. Митта, актриса шыраса халтан кайнăскер, мана пырса тăрăннă. Халĕ, унтанпа вăтăр çул иртнĕ хыççăн, çирĕплетсех калама пултаратăп: эпĕ ун чухне чăн та пуринчен те хитререх курăннă. Курсра мана тўрех "пукане" ят панăччĕ.

## Аквариум витĕр

**– Çапах та паллă çав сценăна илемлĕх канашĕ питĕ вăйлă каклать тесçĕ.**

– Никам та нимĕн те касман, касмалли пулман та унта. Эпир пĕр хусканмасăр выртнă. Филатов та, вăтаннипе, малтан пачах хывăнасшăн марччĕ. Кĕпесĕр ўкерĕнме аран ўкĕте кĕртрĕç ăна. Вăл сăпайлă, интеллигентлă арçын, арăмне питĕ юратать. Унăн сăнарĕ пилĕк таран утиялпа витĕнсе выртать, унта вара, аялта, джинс шăлавар. Ман пирки те мĕн кăна калаçмаççĕ халĕ. Уйрăмах Митта интервьюсенче темĕн те пĕр каласа кăтартать – эпĕ пĕр вăтанмасăр хывăннă имĕш. Анчах та мана кукамай мĕн тери çирĕп воспитани панине пĕлесчĕ сирĕн. Юлашкинчен режиссерпа пĕр чĕлхе тупрăмăрах – пире аквариум витĕр ўкерчĕç.

## Кукамай воспитанийĕ

**– "Çирĕп воспитани панă кукамăр" сире экран çинче курсан мĕн каларĕ вара?**

– Премьерăран киле таврăннă чух вăл мĕн каласса кĕтсе кĕрхи çулçă пек чĕтрерĕм. Çывăх çыннăм вара "ытла шавлă" терĕ кăна. Атте-анне катастрофăра вилсен мана кукамай ўстерчĕ. Питĕ сайра-хутра кăна мухтатчĕ. Тантăшăмсем урамра выляса çўренĕ чухне эпĕ, кукамай хистенипе, кĕнеке шĕкĕлчеттĕм. Балет, драмкружок, сĕрме купăс... Мана вăл артистка пулмах хатĕрлетчĕ. Хăй темиçе класс кăна вĕреннĕ пулин те вĕренў çутине аван ăнланатчĕ. Пушкина, Тургенева мĕнле ача юратса вулатăр-ха? Кукамай мана çакна çемçен хистесе тутаратчĕ. Эпĕ пиллĕк тултарсан вара унăн Саши киноçăлтăр пулассине пурте илтмелле каларĕ вăл. Пĕлĕшсем тăрăхлатчĕç кăна. Анчах эпĕ те, кукамай та вĕсен сăмахне хăлхана та чикместĕмĕр. Эпĕ çак шухăша хăнăхса çитнĕччĕ ĕнтĕ, анчах та вĕренме кĕме шухăш тытсан виççĕмĕш тур витĕр... тухаймарăм. Пĕтрĕм! Георгий Товстоногов кĕнине курсан унăн ури умне ўкрĕм – кукамай килтен хăваласа кăларса ярать, хăй те чăтса ирттереймест! Вăл ман çине пăхса илчĕ те сочинени çырма каймашкăн хушрĕ.



## Кашни рольшĕн турра тав тăваттăм

**– "Экипаж" хыççăн тўрех чапа тухрăр...**

– Ман пуçра кун пек шухăш пулман та. Кашни рольшĕн турра тав тăваттăм. "Человек с бульвара Капуцинов" фильмри сăнара çыртса туртса илтĕм темелле. Тĕп сăнарта кам выляссине Алла Сурикова ниепле те татса параймасть. Эпĕ вара çав вăхăтра Ленинграда тухса кайнăччĕ те вĕçĕмсĕр шăнкăравласа Суриковăна халтан ятăм. Вăл вара пысăк кăкăрлă, шапшурă шăллă хĕре шырать. Шăлĕ юрĕ-ха, кăкăрăм вара ăна тивĕçтерместчĕ. Юлашки сăмаха калама Андрей Миронова ирĕк пачĕ юлашкинчен. Лешĕ мана суйласа илчĕ. Маншăн Миронов космос пекехчĕ! Вăл та мана ĕçтеш пек кăна мар, хитре хĕрарăм пек те хакланăн туйăнатчĕ. Анчах çакă кĕçех ирхи тĕтре пекех сирĕлчĕ. "Андрей, эсĕ кама ытларах юрататăн?" – ыйтрăм унран пĕррехинче. "Анненe", – пулчĕ хурав.

Çапах та çав фильма хутшăнни – чăн-чăн телей. Эпир Крымра ўкерĕнеттĕмĕр. Шăрăх. Эпĕ профессионал балеринăсемпе ташлатăп, кашни шăмă ыратакан пулса çитиччен. Унтан лаша утланса чупатăп. Кайран кольта пўрне çинче çавăрма вĕренетĕп. "Стоп!" сигнал илтĕнсенех пурте лаштах сывласа яратпăр. Сăран тумтирпе тĕлĕнмелле пăчă. Тарланăскерсем хăвăрт кăна хывăнса пăрахса тинĕс хумĕсене чăматпăр. Акă ăçта вăл çăтмах!

## Ăс кĕнĕ

**– Сирĕнпе ĕçлеме çăмăлах маррине калаççĕ...**

– Хам та илтнĕ-ха ку сăмахсене, мана тĕлĕнтерет кăна вăл. Манпа ĕçлеме йывăррине пĕрремĕш хут телекаларăмра каларĕç. Артистсем хутшăннăчĕ унта. Телеертўçĕ Валентин Гафтран манпа ĕçлеме мĕншĕн йывăр пулнине ыйтрĕ. Лешĕ тĕлĕнсех кайрĕ. Нимĕнле кăткăслăх та пулман мĕншĕн тесен! Мана, чăн та, воспитани пама юрататчĕ вăл. "Яковлева, хăçан та пулин ăс кĕрет-ши сана?" – тетчĕ. Валентин Иосифовичпа темиçе çултан тĕл пултăмăр. Эпĕ киноран кайнине, чиновник пулса тăнине пĕлсен: "Кур-ха ăна: ăс кĕнĕ!" – терĕ...

## Унăн хушаматне пăхмасăр вĕренĕç

**– Сирĕн тавра арçынсем кĕшĕлтетнĕ кăна пулĕ?**

– Арçынсемпе явăçма вăхăт кирлĕ вĕт-ха! Эпĕ 20 çултанпа пĕр чарăнми ĕçлетĕп, 36-ра Калининград вице-мэрĕ пулса тăтăм. Икĕ ача çут тĕнчене килнине сиссе те юлаймарăм. Тепĕр чух романсем вулатăп та ăмсанатăп – хĕрарăмсене арçынсем канма ăçта кăна илсе каймаççĕ! Эпĕ вара Турцире те пулса курман!

**– Çапах та качча темиçе хутчен те тухнă-ха эсир...**

– Пĕрремĕш хут пĕрле вĕреннĕ Валерий Кухарешинпа пĕрлешнĕччĕ. Иксĕмĕр те 16-19-сенче. Çичĕ çул пĕрле пурăнтăмăр, икĕ ача çуратрăмăр. Валера та, ашшĕ-амăшĕ те питĕ лайăх çынсемччĕ. Иккĕмĕш упăшкапа "Парашютисты" фильмра паллашрăмăр. Ăна пĕрре курсах килĕштертĕм. Калью Аасмяэ – профессионал парашютист. Тĕл пултăмăр та... уйрăлаймарăмăр. Эпĕ хушамата улăштарма тăрсан нумайăшĕ хирĕçлеме пăхрĕ. "Кĕçех çĕр-шыв çак хушаматăн кашни сас паллине вĕренĕ", – терĕм эпĕ. Çапла пулса тухрĕ те. Нарăс уйăхĕн иккĕмĕшĕнче эпир пĕрлешнĕренпе 30 çул çитет.

## Вице-мэр

**– Актерсем ачи-пăчине курмаççĕ те...**

– Манăн хĕрпе ывăла та кукамай пăхма пулăшрĕ.

**– Анчах та эсир кĕçех професси тăруках улăштарнă.**

– Çĕр-шыв кисренетчĕ ун чух. Вицĕ фильма пĕр кунра хупрĕç. Паллă нумай актера урама кăларса ывăтрĕç ун чухне. Ира Мазуркевич, сăмахран, кепкине куç çине антарса лартатчĕ те... такси рульне пăркалатчĕ. Тăван хула Калининград пулăшрĕ. Эпĕ унта кукамай вилнине пĕлсен таврăннăччĕ. Ним тума пĕлменнипе хула мэрĕ патне кайрăм: "Эпĕ Александра Яковлева. Мана асаннене пытарма пулăшăр", – терĕм те макăрса ятăм. Мэр, чăн та, пулăшрĕ. Каярахпа пĕр кĕтмен çĕртен шăнкăравларĕ те вице-мэр пуканне сĕнчĕ. Мĕнле "вице" пултăр манран? Эпĕ – актриса. "Эпĕ вара – пĕрремĕш рангри капитан", – пулчĕ хурав. Çапла эпĕ чиновник пулса тăтăм. Тăван хула ырлăхĕшĕн пилĕк çул ĕçлерĕм. Мэр черетлĕ суйлава выляса ячĕ. Çĕнни хăйĕн командине илмерĕ. Эпĕ йĕркелене "Янтарная пантера" фестиваль те кирлĕ пулмарĕ ăна. Çапла икĕ ачапа каллех çурăк валашка умĕнче тăрса юлтăм. Калининградра ĕç тупма çукчĕ. Кукамайăн хваттерне сутса Ленинграда таврăнтăм. Ачасем вĕренетчĕç. Упăшкана иксĕмĕр те ĕç шыраса халтан кайрăмăр. Киноçăлтăр Александра Яковлева хула тăрăх ĕç шыраса çўрессине мана кам та пулин маларах калатнă тăк ним тусан та ĕненмĕттĕм. Пĕртен-пĕр "Техношок" фирма директорĕ Олег Тиньков мана хăвалаcа кăларса ямарĕ, çемьене выçлăхран çăлса хăварчĕ. Бизнес тĕнчинче хама мĕнле тыткаламалине те вăлах вĕрентрĕ.



## Актер мар – менеджер

**– Эсир хăвăр ачăрсене вара мĕнле пурнăçа вĕрентрĕр?**

– Самана улшăннине кура эпĕ вĕсене, паллах, актер пулма хатĕрлемен. Вĕсем музыка шкулне те, балет кружокне те çўремен. Эпир капитализм çулĕпе кайрăмăр вĕт. Вĕсенче менеджер пултарулăхне аталантартăм эпĕ. Ывăлăм халĕ "Сапсан" пуйăс пуçлăхĕ. Хĕрĕмĕн аслă икĕ пĕлў, вăл – профессионал маркетолог.

**– Эсир халĕ хăвăр та – чукун çул-йĕр ĕçченĕ мар-и-ха?**

– Çапла. Хальхи ĕçпе танлаштарсан кино – ача сачĕ. Çапах актер профессийĕ кунта та питĕ кирлĕ пулчĕ. "Сапсана", тен, унсăрăн хута та яраймăттăм. Малтан – сценари. Унтан – кастинг. Вара – костюмсем, грим... Эпĕ кашни стюардта хам суйланă. Унтан вĕсене пурне те парикмахерски урлă кăларнă. Формăна кăна виçĕ çул калăпларăмăр. Малалла – репетици: мĕнле пăхмалла, калаçăва мĕнрен пуçламалла. Халĕ те асрах – хĕрсем чăн-чăн стюардсем пулнине малтан никам та ĕненмерĕ... Пурте пĕр кунлăх актрисăсем ĕçлеççĕ тесе шухăшланă.

## Кино ниçта та çухалман

**– Апла сирĕн пурнăçран кино çухалман пулса тухать?**

– Мĕн эсир! Эпĕ кино ăшне кĕрсех ўкнĕ! Манăн сценари тăрăх халĕ "Кенигсберг" фильм ўкереççĕ. Тĕп роле Алексей Серебряков калăплать. Вăл ман пата шăнкăравласа сценари питĕ килĕшнине каларĕ. Эпĕ вăл хулара хам ўснĕ-çке! Кукамай хваттерĕнче манăн çывăрмалли пўлĕм, сăмахран, 33 тăваткал метр пулнă. Мачча çўллĕшĕ – пилĕк метр... Çĕнĕ çулта тăватă метр çўллĕш чăрăш вырнаçтараттăмăр! Ахаль хула мар вăл – Кенигсберг. Унта мистика хуçаланать. Унта Кант, Гофман, Вагнер, Луиза королева пирĕштийĕсем халĕ те çўреççĕ.

**– Çакна ĕненсех калатăр-и?**

– Паллах. Манра хамра та темĕнле вăй пуррине пĕлсех тăратăп. Пирĕн йăхра пулнă вăл. Калăпăр, кирек хăш сыпăкри хĕрарăм арçын пуçне çавăрма пĕлнĕ. Ўсерехпе çакна туйрăм – мана ырă тунă çын патне ырă туххăмрах хăйĕн патнех çаврăнса çитет.

Халĕ, Калининград пирки фильм ўкернĕ май, мистика татах хăй çинчен аса илтерчĕ. Спонсорсем таçтан йăтăнса аннине, паллă актерсем манăн фильмра ўкерĕнес тесе хăйсен графикĕсене улăштарнине урăх мĕнпе ăнлантарма пулать-ха? Ман шухăшпа, хула чунĕ хăй пулăшать пархатарлă ĕçре. Çак фильм хыççăн Калининграда туристсем таврăнасса шанас килет. Картина бомба пек çурăласси, сенсаци çуратасси пирки пачах та иккĕленместĕп. Çитес çул ман пата татах килĕр – интервью илме. Курсах тăрăр – ман алăра Берлин фестивалĕн чи лайăх фильмшăн паракан призĕ пулĕ!

/«7 дней»/.



# И-ХИ-ХИК

Пуйăсра.
– Кунта туртма юрать-и?
– Çук паллах.
– Анчах та эпĕ урайĕнче чĕлĕм тĕпĕсем йăваннине куратăп...
– Вĕсене туртнисем ирĕк ыйтса тăман çав...
* * *
Валерьянка чăнах та лăпланма питĕ аван пулăшать: пĕр стакан эрех пуçне пилĕк тумлам кăна кирлĕ...
* * *
Шотланди. Арăмĕ:
– Лавккана кайса килмеллеччĕ, эпĕ вара юбкăна çурăм та типме ĕлкĕреймен...
Упăшки:
– Манăнне тăхăн...
* * *
Самолетра каччă мăкăртатать:
– Мĕнле апат килсе патăр эсир мана?
– Пирĕн самолетăн двигателĕсем мĕнле ĕçленине пĕлсен эсир апатпа пачах та кăсăкланмăттăр, – тет стюардесса.
* * *
Виçĕ арçынна тура лаша панă – кам мĕн чухлĕ чупать, çавăн чухлĕ çĕр илет.
Пĕри шăп пĕр кун чупать. Ывăнать. “Çитет мана кун чухлĕ çĕрпе...” – шухăшлать хыçалалла çаврăнса пăхнă май.
Теприн виçĕ кун чупнă хыççăн лаши ӳксе вилет. “Мĕнех, мана кун чухлĕпе çитет”, – шухăшлать хайхи.
Виççĕмĕшĕн те виçĕ кунран лаши ӳксе вилет. Хайхи малалла хăй чупма пуçлать. Пĕр сехет чупать, иккĕ... пиллĕк... Ывăнать, ӳкет, хăй çаплах малалла шăвать. Пĕр сехет тапаланать, иккĕ... Вăйĕ пачах пĕтсе çитсен калпакне хывать те малалла перет: “Кунта помидор лартăп...”
* * *
– Арăма пулах тĕне ĕненеме пуçларăм.
– Ан калаç!
– Тамăк çинчен калаçнине илтсен авланиччен кулаттăм кăна эпĕ.
* * *
Вовочка урамра чĕлĕм туртса тăрать. Ун патне хĕрарăм пырать:
– Эсĕ кунта мăкăрлантарса тăнине асу пĕлет-и-ха?
– Эсир урамра ют арçын çумне çулăхнине упăшкăр пĕлет-и-ха?
* * *
Вовочка шкултан таврăннă, ашшĕне дневник кăтартать. “Математикăпа – 2, вырăс чĕлхипе – 2, физикăпа – 2, юрлассипе 5... – вулать ашшĕ. – Турăçăм, ку тăмсай юрлать-и-ха тата?!
* * *
Авăн уйăхĕн пĕрремĕшĕ. Вĕрентекен ачасене шкул йĕркипе паллаштарать.
– Кунта шавлама юрамасть, шăпăрт лармалла. Ыйтмалли пулсан алă çĕклемелле. Эсĕ темĕн ыйтасшăнччĕ-и? – тет хайхи Вовочка алă çĕклenine кура.
– Çук... Эсир калани тĕрĕсех-и тесе тĕрĕслесе кăна пăхасшăн пултăм...
* * *
Арăмĕ упăшкине ыйхăран вăратать:
– Чунăм, тăр-ха, пирĕн тем, вырăн йĕпеннĕ пек... Темĕн хăрушши тĕлленмерĕ пулĕ?..
– Ан та кала-ха! – тĕлĕкре кăна пулнине ăнланса илсен лăштах сывлаÇа ярать упăшки. – Темĕн пысăкăш акула тапăнчĕ мар-и?
– Уй! Эпĕ çавăнтах вилсе каймалла хăранипе!
– Сана юрать-ха вилсен те... Эпĕ вара арçын вĕт-ха ...
* * *
Çĕнĕ çуртăн никĕсне янă çĕрте прораб рабочисемпе калаçать:
– Туссем! Ку объекта хăпартнă çĕрте лайăх ĕçлес пулать, материал вăрламалла мар, вăй çитнĕ таран тăрăшмалла, ята ямалла мар – çапах та хамăр валли тăватпăр.
– Мĕн пулать вара кунта? – кăсăкланаççĕ рабочисем.
– Урăлтаркăч.




* * *
– Хăшĕ йывăртарах: пĕр килограмм мамăк-и е пĕр килограмм тимĕр-и?
– Паллах, тимĕр.
– Пĕлеймерĕн, иккĕшĕ те пĕрех.
– Акă сана пуçăнтан малтан пĕр килограмм мамăкпа шаплаттарам, унтан – пĕр килограмм тимĕрпе. Вара хăшĕ йывăртараххине чухлакан пулăн...
* * *
– Эпĕ юрланă чухне эсĕ мĕншĕн тӳрех чӳрече патне кайса тăратăн? – ыйтать Вовочка амăшĕнчен.
– Çынсем эпĕ сана хĕнетĕп тесе ан шухăшлаччăр тесе...
* * *
Хĕрарăм стоматолог черетлĕ чирлине креслăна вырнаçса ларма пулăшнă май:
– Ас тăватăн-и, Сидоров, эсĕ шкулта ман хыçра ларattăн, çӳçрен туртса халтан яраттăн...



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

### ПРОДАЮ

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.Новинки от КЛОПОВ, МУРАВЬЁВ и ТАРАКАНОВ.** Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**842.Срубы для бани.** Т. 372874.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**70.Дом** с участком в любом состоянии. Т. 8-960-300-87-87.

**80.Землю, дом** в Чебоксарском, Моргаушском р-нах. Т. 489357.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**843.Бычков,** коров, **тёлок,** овец, **свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.



# Сăмах каçмăш

**Владислав Платонов /Шупашкар районĕ/ хатĕрленĕ**



**СЫЛТĂМАЛЛА:** 5. Вырăс художникĕ Илья... /1844-1930 çулсенче пурăннă/. 7. Ăна мăлатукпа çапса кĕртеççĕ. 8. Тарçă. 9. Çурла уйăхĕнчи ĕç çи.10. Сĕрмен ... йывăр кусать. 13. Унпа кирпĕч çапнă çĕрте усă кураççĕ. 16. Кĕлет. 17. ... çыран. 18. Тимĕрпе никель хутăшĕ. 22. Çăвăнса тар кăлармалли вырăн. 24. Кăнтăрта ӳсекен слива евĕр çимĕç. 25. «Пирĕн ... анаталла» /юрăран/. 26. Çав çĕр-шывăн тĕп хули – Дамаск. 27. Хура тинĕс хĕрринчи курорт-хула.

**АЯЛАЛЛА.** 1.Водитель удостоверенийĕ. 2. Вăл – сывлăх çăл куçĕ. 3. Çынна шан, ... тĕрĕслеме ан ман. 4. Мария Ухсайăн «... çилсем» кĕнеки. 6. Паркет. 11. Литература жанрĕн форми. 12. Чехи тĕп хули. 13. тĕллев патне çул уçăлса пыни. 19. ... хыççăн юлать, пушар хыççăн йăлтах тĕп пулать. 20. Ĕлĕк унпа свай çапса кĕртнĕ. 21. Сахăр та, пыл та – ... çимĕç. 22. Автансăр ял. 23. Мускав облаçĕнчи ...-Фоминск хули.


«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – А.И.ИЗМАН

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

Çырăнмалли индекс: 11515



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, “Чăваш хĕрарăмĕ”
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@chtts.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8894. Заказ 327.